С32
Ч-40607

Л.П.Сергеев, Е.А.Андреева

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

## Справочник

*5–11-мĕш классем валли*

Национальная библиотека ЧР
4-040607

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К 92; К 81.4Чув-92 С32
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

Л.П. Сергеев, Е.А. Андреева

# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ

## Справочник

*5—11-мӗш классем валли*

Кр.

Шупашкар
2006

УДК 373.167.1
ББК 81. 2 Чув — 922
С 32

*Чăваш Республикин*
*Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви*
*усă курма ирĕк панă*

Рецензентсем:
***Н.П.Петров*** —
филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор;
***Т.В.Артемьева*** —
педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент

Ч - 40607
ПРОВЕРЕНО
20 1о1 5 МАР 2017
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

**Сергеев Л.П., Андреева Е.А.**
С 32 Чăваш чĕлхи: Справочник. — Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ, 2006. — 67 с.

© Сергеев Л.П., Андреева Е.А., 2006
© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви, 2006

## ХАКЛĂ ВĔРЕНЕКЕНĔМĔР!

Санăн аллунта – чăваш чĕлхи справочникĕ. Кунта 5–11-мĕш классенче вĕренмелли грамматика материалне таблицăсене вырнаçтарнă. Ку кĕнеке сана кирек хăçан та кирлĕ пулĕ: çĕнĕ темăна вĕренетĕн-и, маларах вĕреннине аса илетĕн-и, экзамена е олимпиадăсемпе викторинăсене хатĕрленетĕн-и – справочник яланах пулăшма пултарĕ. Уйрăмах вăл темиçе çул каялла пăхса тухнă ыйтусене аса илсе çирĕплетме меллĕ.

Кĕнекери материала шкул программинче вĕренме палăртнă йĕркепе вырнаçтарса тухнă: фонетика, лексика, сăмах тытăмĕ, морфологи тата синтаксис. Тĕрĕс çырмалли правилăсене морфологи ыйтăвĕсем хыççăн пĕр çĕре пухса çырса кăтартнă. Кирлĕ материала шыраса тупма çăмăл пултăр тесе кĕнекен тупмалли пайĕнче вакрах темăсене те кăтартнă.

Справочникри чĕлхе материалĕ шкулти вĕренӳ кĕнекисемпе шайлашуллă. Уйрăмлăхĕ – материала кĕскен, уçăмлăн таблицăсене вырнаçтарса тухни. Правилăсене тивĕçлĕ тĕслĕхсемпе çирĕплетсе панă. Вĕсемпе усă курса кашни харпăр хăй тĕллĕн тишкерӳсем тума, пĕлĕве ӳстерсе çирĕплетме пултарĕ.

Çак кĕнеке аслă шкулсене вĕренме кĕме ĕмĕтленекенсене те усă кӳрĕ.

Пĕтĕмлетсе каласан, çак справочник санăн çывăх юлташу пулса тăрасса эпир шанатпăр, вĕренӳре сана ăнăçусем сунатпăр.

*АВТОРСЕМ*

# ФОНЕТИКА

Пуплеври сасăсем çинчен вĕрентекен чĕлхе ăслăлăхĕн пайне **фонетика** теççĕ.

## Алфавит

Аа, Ăă, Бб, Вв, Гг, Дд, Ее, Ёё, Ĕĕ, Жж, Зз, Ии, Йй, Кк, Лл, Мм, Нн, Оо, Пп, Рр, Сс, Çç, Тт, Уу, Ӳӳ, Фф, Хх, Цц, Чч, Шш, Щщ, ъ, Ыы, ь, Ээ, Юю, Яя.

Чăваш алфавитĕнче пурĕ 37 сас палли, вĕсенчен 13-шĕ – уçă сас паллисем, 22-шĕ – хупă сас паллисем. ***Ъ, ь*** паллăсем сасăсене пĕлтермеççĕ.

## Уçă сасăсем

Чăваш чĕлхинчи уçă сасăсем, *о* сасăсăр пуçне, мăшăрлă.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Хытă уçă сасăсем (хыттăн илтĕнеççĕ) | а | ă | ы | у | о |
| Çемçе уçă сасăсем (çемçен илтĕнеççĕ) | э | ĕ | и | ӳ | |

***О*** сасă вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенче çеç тĕл пулать: *орден, кино, домино, герой.*

## Сингармонизм (уçă сасăсен килĕшĕвĕ)

Сăмахри уçă сасăсем хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен килĕшсе тăнине **уçă сасăсен килĕшĕвĕ (сингармонизм)** теççĕ.

| Сăмах тĕсĕсем | Сăмахри уçă сасăсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. Хытă сăмах | Пурте хытă | *Кушак, вăкăр, сысна, лаша, автан, кăркка, йăмра.* |
| 2. Çемçе сăмах | Пурте çемçе | *Ёне, кĕнеке, пĕлĕт, вĕрене, эмел, кишĕр, çĕлĕк.* |
| 3. Хутăш сăмах | Хытă тата çемçе уçă сасăсем | *Атте, анне, мучи, путек, пукане, тăри, пăри, шăши, тиха.* |

## Аффикссен хытă тата çемçе варианчĕсем

Хытă сăмах çумне аффиксăн хытă варианчĕ, çемçе сăмах çумне аффиксăн çемçе варианчĕ хушăнать.

| Хытă тата çемçе вариантлă аффикссем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| ***-а(-е), -та(-те), -тан(-тен), -па(-пе), -лăх(-лĕх), -у(-ÿ), -нă(-нĕ), -са(-се), -лан(-лен), -акан(-екен), -ма(-ме), -малла(-мелле)*** т. ыт. те. | *лар — акан, сан, ма, нă, у*<br>*пĕл — екен, сен, ме, нĕ, ÿ* |

## Уçă сасăсен килĕшĕвне пăсакан аффикссем

| Аффикссем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| ***-сем:*** | *лашасем, сурăхсем, йăмăксем;* |
| ***-мĕш:*** | *тăваттăмĕш, улттăмĕш, саккăрмĕш, вуннăмĕш;* |
| ***-иччен:*** | *çыриччен, лариччен, вуличчен;* |
| ***-скер:*** | *вăйлăскер, пысăкскер, аванскер;* |
| ***-ĕ(-и):*** | *лаши, шкулĕ, йăмри, вăрманĕ* |

## Хупă сасăсем

Хупă сасăсене каланă чух сывлăш юхăмĕ çăвар хăвăлĕнчен ирĕккĕн тухаймасть: ăна ирĕккĕн тухма е чĕлхе, е тутасем чăрмантараççĕ.

Чăваш алфавитĕнче пурĕ 22 хупă сас палли: *б, в, г, д, ж, з, й, к, л, м, н, п, р, с, ç, т, х, ф, ц, ч, ш, щ.*

## Юнашар тăракан хупă сасăсен пĕрпекленĕвĕ

| Сасăсем | Калаççĕ | Çыраççĕ |
|---|---|---|
| ***çс*** | çимĕççем<br>калаçça | *çимĕçсем*<br>*калаçса* |
| ***сш*** | каяшшăн<br>итлешшĕн | *каясшăн*<br>*итлесшĕн* |
| ***шс*** | шухăшшем<br>чăрăшшăр | *шухăшсем*<br>*чăрăшсăр* |
| ***тп*** | вулаппăр<br>ĕçлеппĕр | *вулатпăр*<br>*ĕçлетпĕр* |
| ***тч*** | калаччĕ<br>ĕçлеччĕ | *калатчĕ*<br>*ĕçлетчĕ* |
| ***нл*** | мĕлле | *мĕнле* |

## Хытă тата çемçе хупă сасăсем

| Хупă сасăсен вырăнĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Хытă уçă сасăпа юнашар тăракан хупă сасăсем пурте хыттăн илтĕнеççĕ | *вăл, кăмака, лаша, мăк, нумай, пăр, сăмах, тыт* |
| Çемçе уçă сасăпа юнашар тăракан хупă сасăсем пурте çемçен илтĕнеççĕ | *виçĕ, кĕпер, михĕ, нимĕр, пĕлĕт, сĕлĕ, çĕнĕ, тилĕ* |

## Хупă сасăсем янăраса илтĕнни

| Хупă сасăсем | Сăмахри вырăнĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| ***к, п, с, ç, т, х, ч, ш*** | икĕ уçă сасă хушшинче | *така* [тага], *упа* [уба], *сасă* [сазă], *выçă* [выз'ă], *вată* [вадă], *сухал* [суХал], *ача* [аЧа], *хушă* [хужă] |
| | янăравлă хупă сасăпа уçă сасă хушшинче | *çамка* [çамга], *хăмпă* [хăмбă], *харсăр* [харзăр], *çулçă* [çулз'ă], *карта* [карда], *сулхăн* [сулХăн], *арча* [арЧа], *çулшăн* [çулжăн] |

## Ялан янăравлă хупă сасăсем

| Хупă сасăсем | Сăмахри сасă вырăнĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| ***в, й, л, ль, м, н, нь, р*** | сăмах пуçламăшĕнче | *вăрман, вăйă, лаша* |
| | сăмах варринче | *автан, йăмра* |
| | сăмах вĕçĕнче | *лав, улăм, сахал* |

### Хупă сасăсем
### вăрăммăн тата кĕскен илтĕнни

Хупă сасăсем чăваш сăмахĕсенче кĕскен те, вăрăммăн та илтĕнеççĕ, сасса вăрăммăн е кĕскен калани пĕр сăмаха теприн-чен уйăрса илме пулăшать. Вăрăм хупă сасса çырура икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртаççĕ.

| | | | |
|---|---|---|---|
| *тĕтĕм* | *тĕттĕм* | *тути* | *тутти* |
| *така* | *такка* | *сивĕн* | *сиввĕн* |
| *ăшăн* | *ăшшăн* | *вăртăн* | *вăрттăн* |
| *алă* | *аллă* (50) | *пилĕк* | *пиллĕк* (5) |
| *патăр* | *паттăр* | *ана* | *Анна* |
| *хутаçĕ* | *хутаççĕ* | | |

Кунашкал тĕслĕхсенчи кĕске хупă сасă яланах янăраса ил-тĕнет.

## УДАРЕНИ

Сăмах сыпăкĕсенчен пĕрне вăйлăрах каланине **ударени** теççĕ: *япала́, кăма́ллă, кăмпа́, çа́мрăк.*

### Ударени йĕрки

**1.** Сăмахра **ă, ĕ** сасăсем çук пулсан ударени яланах юлашки сыпăк çине ӳкет: *хаçа́т, пукане́, самана́.*

**2.** Сăмах сыпăкĕсенчи усă сасăсем пурте **ă, ĕ** пулсан ударени пĕрремĕш сыпăк çине ӳкет: *çáмăллăх, пе́лĕтлĕ, çе́мĕртлĕх.*

**3.** Сăмах сыпăкĕнче **ă, ĕ** сасăсемпе пĕрле ытти сасăсем те пулсан ударени йĕрки çакăн пек:

а) ударени нихăçан та **ă, ĕ** сасăллă сыпăк çине ӳкмест;

ă) **ă, ĕ** сасăсем юлашки сыпăкра мар чухне ударени юлаш-ки сыпăк çине ӳкет: *сăма́х, вăрманта́, кĕнекесе́м, чăрăшлăхра́;*

б) **ă, ĕ** сасăсем юлашки сыпăкра е юлашки сыпăксенче пулсан ударени вĕсем умĕнчи сыпăк çине ӳкет: *па́ттăрлăх, кăмпа́çă, ăнла́нтăмăр, кĕнеке́ллĕ.*

## ЛЕКСИКА

Чĕлхери мĕн пур сăмах йышне **лексика** теççĕ.

Чĕлхе ăслăлăхĕн сăмахсене тĕпчесе вĕрентекен пайне **лекси-кологи** теççĕ.

### Сăмахсен тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсем

| Сăмахсен тӳрĕ пĕлтерĕшĕсем | Сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕшĕсем |
|---|---|
| *ылтăн çĕрĕ* | *ылтăн алă* |
| *кĕмĕл укçа* | *кĕмĕл сывлăм* |
| *куç харши* | *чӳрече харши* |
| *йывăç пасарнă* | *çӳç пасарнă* |
| *йывăр çĕклем* | *йывăр ĕç* |
| *ăшă сĕт* | *ăшă сăмах* |

Тĕслĕхсем: *Ача ирех* ***вăранчĕ*** (тӳрĕ). *Çут çанталăк* ***вăранчĕ*** (куçăмлă).

### Синонимсем

Тĕрлĕрен илтĕнекен, çывăх е пĕр тан ăнлава пĕлтерекен сăмахсене **синонимсем** теççĕ. Тĕслĕхсем: *юмах, халап; мулкач, куян; ырхан, начар; хыткан, имшер; хăпар, улăх; тăн, ăс; мăнтăр, самăр; чуп, ыткăн, вăркăн; телей, ăраскал.*

Тĕслĕх: *Васкасси* ***васка*** *та, ытлашши ан* ***хыпалан.*** (Ват. сăм.)

### Омонимсем

Пĕр пек илтĕнекен, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсене **омонимсем** теççĕ. Тĕслĕхсем: *Çул* (дорога) – *çул* (год), *шăпăр* (урай шăлмалли) – *шăпăр* (музыка инструменчĕ), *вĕрет* (çил вĕрет) – *вĕрет* (яшка вĕрет), *пăрçа* (ӳсен-тăран) – *пăрçа* (чĕр чун), *уçă* (çăрана уçмалли) – *уçă* (сулхăнрах, сивĕрех).

Тĕслĕхсем: *Сырма пуçне* ***пăрçа*** *акрăмăр. –* ***Пăрçа*** *хăй пĕчĕккĕ, анчах хытă çыртать.*

### Антонимсем

Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ, пĕр пуплев пайнех кĕрекен сăмахсене **антонимсем** теççĕ. Тĕслĕхсем: *ир – каç, çулла – хĕлле, сивĕ – ăшă, хура – шурă, хăпар – ан, кай – кил, тус – тăшман, нумай – сахал, ĕçле – кан.* Тĕслĕх: ***Ĕç*** *çĕклет,* ***ӳркев*** *ӳкерет.* (Ват. сăм.)

### Ятарлă сăмахсем (профессионализмсем)

Пĕр-пĕр профессипе çыхăннă ятарлă сăмахсене **профессионализмсем** теççĕ. Тĕслĕхсем: *сава, вăрăм сава, ик аврлă сава, пăчкă, ал пăчки, мăлатук, ножовка* (столярсен сăмахĕсем); *пыл хурчĕ, ама хурчĕ, ĕç хурчĕ, сăрă хурт, çăвăр хурт, вĕлле, тĕтĕркĕч, хурт питлĕхĕ* (утарçăсен сăмахĕсем); *вакцина, диагноз, рентген, пинцет* (тухтăрсен сăмахĕсем).

## Йышăннă сăмахсем

Тăван чĕлхери урăх чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсене **йышăннă сăмахсем** теççĕ. Тĕслĕхсем: а) вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем – *сĕтел, чашăк, апат, шушкă, суха, кĕрепле, пиншак, карттус, чăлха;* ă) вырăс чĕлхи урлă йышăннă сăмахсем – *футбол, спорт, экзамен, геометри, костюм, журнал, директор, компьютер.*

## Кивелнĕ сăмахсем

Куллен усă курма пăрахса çĕннисемпе улăштарнă сăмахсене **кивелнĕ сăмахсем** е **архаизмсем** теççĕ.

| Ĕлĕк каланă | Халĕ калаççĕ |
|---|---|
| *элем* | *ялав* |
| *ант* | *тупа* |
| *антăх* | *тупа ту* |
| *им-çам* | *эмел* |
| *чухăç* | *мăлатук* |
| *хĕсмет* | *çарта тăни* |
| *тарай* | *пурçăн* |
| *пăран* | *путек* |

Тĕслĕхсем: ***Тарай*** *тутăр.* ***Пурçăн*** *тутăр.*

## Çĕнĕ сăмахсем

Çĕнĕ япаласемпе пулăмсене, ăнлавсене пĕлтерекен сăмахсене **çĕнĕ сăмахсем** е **неологизмсем** теççĕ. Тĕслĕхсем: *уççăнлăх, çеçпĕлçĕ, хăмлаçă, тăнăçлăх, тăхтав.*

## Диалект сăмахĕсем

Вырăнти калаçура çеç тĕл пулакан сăмахсене **диалект сăмахĕсем** теççĕ.

| Диалект сăмахĕсем | Литература чĕлхинчи сăмахсем |
|---|---|
| *пор* | *пур* |
| *сахат* | *сехет* |
| *коккăль* | *кукăль* |
| *атти* | *атте* |
| *маçак* | *асатте* |
| *мăн хăяр* | *кавăн* |
| *шĕкĕнтĕр* | *кишĕр* |
| *алай* | *çапла* |
| *вăткасси* | *турчăка* |
| *эп вуласа* | *эпĕ вуларăм, вуланă* |
| *хусамăр* | *хăвăр* |

Тĕслĕх: *Кăçал* ***мăн хăяр*** *шотсăр лайăх* ***полчĕ.***

### Тиркевлĕ сăмахсем

**Лăпăртат, лĕпĕртет** «калаç; пустуй калаç»
**Çатăртат** «пит васкаса калаç»
**Йăкăртат** «вĕттĕн-вĕттĕн утса кай»

## СĂМАХ ТЫТĂМĔ

### Сăмах тымарĕ тата аффикссем

**Тымар** – сăмахăн пĕлтерĕшлĕ чи кирлĕ тĕп пайĕ. Ун çумне хушăнса пыракан пĕлтерĕшлĕ пайсене **аффикссем** теççĕ.

| Тымар | Аффикссем |
|---|---|
| *çыр* | *-у* |
| *çыр* | *-у-çă* |
| *çыр* | *-ав-çă* |
| *çыр* | *-у-лăх* |
| *çыр* | *-у-лăх-лă* |
| *çыр* | *-акан-сем-пе* |
| *çыр* | *-ав-çă-сем-пе* |
| *çыр* | *-ав-çă-сен-чен* |

### Сăмаха улăштаракан аффикссем

| Пуплев пайĕ | Пĕрреллĕ хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| Япала ячĕ | а) *юман* | *юман-сем* |
| | *юман-ăн* | *юман-сен* |
| | *юман-а* | *юман-сен-е* |
| | *юман-ра* | *юман-сен-че* |
| | *юман-ран* | *юман-сен-чен* |
| | *юман-па* | *юман-сем-пе* |
| | *юман-сăр* | *юман-сем-сĕр* |
| | *юман-шăн* | *юман-сем-шĕн* |
| | ă) *вĕренӳ кĕнек-и* | |
| | *шкул пахч-и* | |
| | *анне сăмах-ĕ* | |
| | *сăмах тĕп-ĕ* | |
| Паллă ячĕ | *хура-рах* | |
| | *кăвак-рах* | |
| | *самăр-тарах* | |
| | *чипер-терех* | |
| | *пĕчĕк-рех* | |
| Глагол | *çыр-ат-ăп* | |
| | *кил-ет-п-ĕр* | |
| | *пĕл-т-ĕм-ĕр* | |
| | *лар-нă* | |
| | *пĕл-екен* | |

## Сăмах тăвакан аффикссем

Сăмах тăвакан аффикссем çĕнĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тăваççĕ. Вĕсем ытларах япала ячĕ, паллă ячĕ, глагол çумне хушăнаççĕ.

| Пуплев пайĕ | Аффикссем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Япала ячĕ | *-лăх(-лĕх)*<br>*-лан(-лен)*<br>*-ла(-ле)* | *юманлăх, шĕшкĕлĕх, хырлăх, çăкалăх*<br>*апатлан, пăрлан, пĕлĕтлен, ăслан*<br>*шутла, пăрала, сӳреле, тикĕтле, агитациле* |
| Паллă ячĕ | *-лăх(-лĕх)*<br>*-лат(-лет)* | *çĕнĕлĕх, çамрăклăх*<br>*хитрелет, тарăнлат, илемлет, ăшăхлат, пĕчĕклет* |
| Глагол | *-у(-ӳ)*<br>*-кăч(-кĕч)*<br>*-ăç(-ĕç)*<br>*-ăк(-ĕк)* | *çыру, пĕлӳ, пуху, килĕшӳ, калаçу*<br>*ĕмкĕч, вĕркĕч, пускăч, мăйкăч, виткĕч*<br>*канăç, тапăç, манăç, тивĕç, ӳкĕнĕç*<br>*татăк, çĕтĕк, чĕрĕк, катăк, хуçăк, çĕмрĕк* |

## Сăмах тĕпĕ

Сăмахран ăна улăштаракан аффикса кăларса пăрахсан юлакан пайĕ **сăмах тĕпĕ** пулать.

| Сăмах тĕпĕ ***чăрăш*** | Сăмах тĕпĕ ***чăрăшлăх*** |
|---|---|
| *чăрăш-ăн*<br>*чăрăш-а*<br>*чăрăш-ра*<br>*чăрăш-ран*<br>*чăрăш-па* | *чăрăшлăх-ăн*<br>*чăрăшлăх-а*<br>*чăрăшлăх-ра*<br>*чăрăшлăх-ран*<br>*чăрăшлăх-па* |

## Пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле сăмахсем

| Сăмах тĕсĕ | Уйрăмлăхĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. Пĕрремĕшле сăмах | Тымартан çеç тăрать | *куç, пуç, ура; кай, кил, лар; хура, шурă, симĕс; пĕрре, иккĕ, виççĕ, саккăр* |
| 2. Иккĕмĕшле сăмах | Тымартан тата сăмах тăвакан аффиксран тăрать | *хырлăх, чăрăшлăх, куçлăх; пĕлӳ, лару, кĕтӳ; шутла, кулала, кăкла, чысла* |
| | Икĕ е виçĕ тымартан тăрать | *анкарти < авăн карти*<br>*улмуççи < улма йывăççи*<br>*асанне < аслă анне*<br>*ыхрути < ыхра ути* |

## Хутлă сăмахсен пулăвĕ

| Икĕ сăмах кĕскелсе пĕрлешнипе | Сăмахсене ятарласа кĕскетнипе | Пуçламăш сасăсене е сас паллисене пĕрлештернипе (аббревиатурăсем) |
|---|---|---|
| *пиçиххи* < пилĕк çыххи<br>*кăçатă* < кĕççе атă<br><br>*хутруççи* < хутăр йывăççи<br>*кăçал* < ку çул | *райхаçат* < район хаçачĕ<br>*литпĕрлешӳ* < литература пĕрлешĕвĕ<br><br>*электрохунар* < электричество хунарĕ<br>*ялкор* < ялти корреспондент | *ШЁМ* – Шалти ĕçсен министерстви<br>*ЧППУ* – Чăваш патшалăх педагогика университечĕ<br>*ЧПУ* – Чăваш патшалăх университечĕ<br>*ГЭС* – гидроэлектростанци |

## Мăшăр сăмахсем

Пĕр пуплев пайне кĕрекен сăмахсене мăшăрлатса каланă иккĕмĕшле сăмахсене **мăшăр сăмахсем** теççĕ. Вĕсене яланах дефиспа çыраççĕ:

| | |
|---|---|
| *атă-пушмак* | *вагă-вĕтĕ* |
| *сĕтел-пукан* | *тĕрĕс-тĕкел* |
| *атте-анне* | *паян-ыран* |
| *сĕт-турăх* | *ирĕн-каçăн* |
| *çăкăр-тăвар* | *арăш-пирĕш* |
| *хаçат-журнал* | *виç-тăват* |

**Асăрхăр!** Ку тĕслĕхсем мăшăр сăмахсем пулмаççĕ:

| | |
|---|---|
| *çутă кăвак* | *шупка кăвак* |
| *тĕксĕм симĕс* | *йĕпкĕн хура* |

## Мăшăр сăмахсен пулăвĕ

| Мĕнрен пулаççĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Синонимсенчен | *уй-хир, аш-какай, апат-çимĕç, ĕлĕк-авал, хĕн-хур, ӳрĕк-сӳрĕк* |
| 2. Антонимсенчен | *вагă-вĕтĕ, хура-шур, ир-каç, лару-тăру, суту-илӳ, унта-кунта* |
| 3. Пĕр йышши ăнлава пĕлтерекен сăмахсенчен | *сĕтел-пукан, çăкăр-тăвар, сĕт-турăх, ал-ура, шăна-пăван, йĕпе-сапа* |

### Икĕ хут калакан сăмахсем

Пуплевре пĕр-пĕр сăмаха икĕ хут калаççĕ. Сăмаха икĕ хут калани япала нумаййине, пахалăх вăйлине, ĕç вăраха пынине (нумай вăхăта тăсăлнине) пĕлтерет:

***шурă-шурă*** *чечексем* ***хир-хир*** *урлă каçрăмăр*
***чашки-чашки*** *çырли* ***пин-пин*** *çăлтăр*
***ял-ял*** *витĕр тухрăмăр* ***вун-вун*** *кĕнеке туянтăм*

Аффикс сăмахăн каçни пайĕ çумне те, юлашки пайĕ çумне те хушăнма пултарать:

*лаптă**кăн**-лаптă**кăн*** *кунĕ-кунĕ**пе***
*хăшĕ**н**-хăшĕ**н*** *ĕмĕр-ĕмĕр**ех***
*юрла**сан**-юрла**сан*** *пинĕ-пинĕ**пе***
*ир-ир**ех***

# МОРФОЛОГИ

**Морфологи** тесе пуплев пайĕсене, вĕсен грамматика паллисене тата сăмахсен улшăнăвне тĕпчекен грамматика пайне калаççĕ.

## ЯПАЛА ЯЧĔ

Япалана е япалалăха пĕлтерекен сăмаха **япала ячĕ** теççĕ. Ыйтăвĕсем: ***кам? мĕн?***

### Пайăр тата пайăр мар ятсем

| Япала ячĕсен ушкăнĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. **Пайăр мар ятсем** – пĕр йышши япаласене пĕтĕмлетсе панă ятсем | *юхан шыв, кÿлĕ, пĕве, хула, ял, кĕнеке, журнал, çын, завод* т. ыт. те |
| 2. **Пайăр ятсем** – пĕр йышши япаласенчен пĕрне уйăрса илме ăна хăйне панă уйрăм ят | *Мускав, Шупашкар, Канаш, Мир проспекчĕ, Ашмарин урамĕ, Чăваш Республики, «Ялав» журнал, «Хыпар» хаçат, «Нарспи» поэма, «Хурçă шанчăк» сăвă, Çĕнĕ çул уявĕ, «Элара» завод, «Ударник» хуçалăх, Кампур йытă* |

## Япала ячĕсен хисепĕ

| Хисепсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. **Пĕрреллĕ хисеп** – япала пĕрре, пĕччен пулнине пĕлтерет. Унăн хисеп аффиксĕ çук | *юман, çерçи, ача, лаша, хула, урам, тетрадь, кĕнеке, учитель, лĕпĕш* |
| 2. **Нумайлă хисеп** – япала нумаййине пĕлтерет. Унăн аффиксĕ – *-сем* | *юмансем, çерçисем, ачасем, лашасем, хуласем, урамсем, тетрадьсем, кĕнекесем, учительсем, лĕпĕшсем* |

## Япала ячĕсен пулăвĕ

| Мĕнле мелпе пулаççĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Аффикссем хушăннипе | *çыру, пĕлӳ, савăнăç, чăрăшлăх* |
| 2. Икĕ е виçĕ сăмах пĕрлешнипе | *çăраççи, асатте, электрохунар* |
| 3. Икĕ сăмаха мăшăрлатса каланипе | *çăкăр-тăвар, атте-анне, уй-хир* |

## Аффикс хушăнса пулнă япала ячĕсем

| Аффикссем | Мĕнле пуплев пайĕ çумне хушăнаççĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. **Тухăçлă аффикссем:** | | |
| ***-лăх(-лĕх)*** | япала ячĕ | *хурăнлăх, çĕмĕртлĕх, юманлăх, карăшлăх, питлĕх, çăварлăх, тивĕçлĕх, канăçлăх* |
| ***-çă(-çĕ)*** | япала ячĕ | *юмахçă, шăпăрçă, утарçă, пулăçă* |
| ***-ашка(-ешке)*** | япала ячĕ | *ачашка, тăрнашка* |
| ***-у(-ӳ)*** | глагол | *вĕренӳ, ăмăрту, пĕлтерӳ, çыру, калаçу* |
| ***-в*** | глагол | *калав, мухтав, суйлав, тĕпчев, шырав* |
| ***-ăм(-ĕм)*** | глагол | *чăтăм, юхăм, ӳсĕм, сисĕм, утăм, парăм* |
| ***-ăç(-ĕç)*** | глагол | *тухăç, анăç, канăç, пурăнăç, савăнăç* |
| ***-ăш(-ĕш)*** | глагол | *пĕлĕш, кулăш, тупăш, пĕлтерĕш, çаврăнăш* |
| 2. **Тухăçсăр аффикссем:** | | |
| ***-а(-е)*** | глагол | *турта, вите, виçе, ака* |
| ***-ак*** | глагол | *тăкак, чăмлак* |
| ***-алăк(-елĕк)*** | глагол | *каçалăк, вителĕк* |
| ***-ам(-ем)*** | глагол | *тумлам, тĕркем, хутлам* |
| ***-ма(-ме)*** | глагол | *каçма, чикме, çырма, пусма, çĕртме* |
| ***-не*** | глагол | *парне, пĕрне, чĕрне* |
| ***-чăк(-чĕк)*** | глагол | *ӳкерчĕк, шанчăк, сурчăк, хырчăк* |

### Пулăшу пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсем

***Ай, çи, ум, аяк, ăш, вар(ă), вĕç, пуç, çум, тăр(ă), хыç.***

Тĕслĕхсем: *сĕтел айĕнче (айне, айĕнчен), тенкел çинче (çине, çинчен), пÿрт умĕнче (умне, умĕнчен), урам вĕçĕнче (вĕçне, вĕçĕнчен)* т.ыт.те.

## ЯПАЛА ЯЧĔСЕН КАМĂНЛĂХ ФОРМИ

Япала камăн е мĕнĕн пулнине кăтартакан формăна **камăнлăх форми** теççĕ.

### Камăнлăх формин аффиксĕсем

| Сăпатсем | Аффикссем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| **1-мĕш сăпат** япала калакан çыннăн хăйĕн пулнине пĕлтерет | ***-ăм(-ĕм)*** | *тусăм, çĕлĕкĕм* |
| **2-мĕш сăпат** япала хăйпе калаçакан çыннăн пулнине пĕлтерет | ***-у(-ÿ)*** | *тусу, çĕлĕкÿ* |
| **3-мĕш сăпат** япала кам çинчен калаçатпăр, çавăн пулнине пĕлтерет | ***-ĕ, -и*** | *тусĕ, çĕлĕкĕ; лаши* |

### Камăнлăх формисен пулăвĕ

| Сăмах тĕпĕ мĕнле сасăпа пĕтет | Сăпат | Япалипе сăпачĕ пĕрреллĕ хисепре | Япали пĕрреллĕ хисепре, сăпачĕ нумайлă хисепре |
|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 |
| Хупă сасăпа – *юлташ* | 1 | *юлташ-ăм*<br>*тетрад-ĕм* | *юлташ-ăм-ăр*<br>*тетрад-ĕм-ĕр* |
| Вăл шутра ***т, д, дь*** сасăпа – *тетрадь* | 2 | *юлташ-у*<br>*тетрад-ÿ* | *юлташ-V*-ăр*<br>*тетрад-V-ĕр* |
| | 3 | *юлташ-ĕ*<br>*тетрач-ĕ* | *юлташ-ĕ-V*<br>*тетрач-ĕ-V* |
| ***а(е)*** сасăпа – *лаша, кĕнеке* | 1 | *лаша-м*<br>*кĕнеке-м* | *лаша-м-ăр*<br>*кĕнеке-м-ĕр* |
| | 2 | *лаш-у*<br>*кĕнек-ÿ* | *лаш-V-ăр*<br>*кĕнек-V-ĕр* |
| | 3 | *лаш-и*<br>*кĕнек-и* | *лаш-и-V*<br>*кĕнек-и-V* |
| ***ă(ĕ)*** сасăпа:<br>а) умĕнче пĕр хупă сасă – *сăвă, сĕлĕ* | 1 | *сăвв-ăм*<br>*сĕлл-ĕм* | *сăвв-ăм-ăр*<br>*сĕлл-ĕм-ĕр* |
| | 2 | *сăвв-у*<br>*сĕлл-ÿ* | *сăвв-V-ăр*<br>*сĕлл-V-ĕр* |
| | 3 | *сăвв-и*<br>*сĕлл-и* | *сăвв-и-V*<br>*сĕлл-и-V* |

| 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|
| ă) умĕнче икĕ хупă сасă – *пăчкă, тенкĕ* | 1<br><br>2<br><br>3 | *пăчк-ăм*<br>*тенк-ĕм*<br>*пăчк-у*<br>*тенк-ÿ*<br>*пăчк-и*<br>*тенк-и* | *пăчк-ăм-ăр*<br>*тенк-ĕм-ĕр*<br>*пăчк-V-ăр*<br>*тенк-V-ĕр*<br>*пăчк-и-V*<br>*тенк-и-V* |
| ***у(ÿ)*** сасăпа – *çыру* | 1<br>2<br>3 | *çырă-в-ăм*<br>*çырă-в-у*<br>*çырă-в-ĕ* | *çырă-в-ăм-ăр*<br>*çырă-в-V-ăр*<br>*çырă-в-ĕ-V* |
| ***и*** сасăпа – *пăри* | 1<br>2<br>3 | *пăри-й-ĕм*<br>*пăри-й-ÿ*<br>*пăри-й-ĕ* | *пăри-й-ĕм-ĕр*<br>*пăри-й-V-ĕр*<br>*пăри-й-ĕ-V* |
| ***о*** сасăпа – *пальто* | 1<br>2<br>3 | *пальто-в-ăм*<br>*пальто-в-у*<br>*пальто-в-ĕ*<br>е *пальт-и* | нумайлă хисепре каламаççĕ |

*Схемăри V паллă аффикс çуккине пĕлтерет.

Япала нумайййине пĕлтерме асăннă формăсем çумне нумайлă хисеп аффиксĕ ***-сем*** хушăнать:

| Сăпат | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1-мĕш | *юлташăмсем – юлташăмăрсем*<br>*кĕнекемсем – кĕнекемĕрсем* |
| 2-мĕш | *юлташусем – юлташăрсем*<br>*кĕнекÿсем – кĕнекĕрсем* |
| 3-мĕш | *юлташĕсем – юлташĕсем*<br>*кĕнекисем – кĕнекисем* |

## Падежсен ыйтăвĕсемпе аффиксĕсем

| Падеж | Ыйтусем | Аффикссем |
|---|---|---|
| **Тĕп** | кам? мĕн? | – |
| **Камăнлăх** | камăн? мĕнĕн? | *-ăн, -ĕн, -н* |
| **Пару** | кама? мĕне? | *-а, -е* |
| **Вырăн** | камра? мĕнре? | *-ра, -ре, -та, -те, -че* |
| **Туху** | камран? мĕнрен? | *-ран, -рен, -тан, -тен, -чен* |
| **Пĕрлелĕх** | кампа? мĕнпе? | *-па, -пе, -пала, -пеле* |
| **Çуклăх** | камсăр? мĕнсĕр? | *-сăр, -сĕр* |
| **Пирке** | камшăн? мĕншĕн? | *-шăн, -шĕн* |

## Падежсен пĕлтерĕшĕсем

| Падеж | Пĕлтерĕшĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. Тĕп | Япала ячĕ ĕçе тăваканнине, вăл кам е мĕн иккенне пĕлтерет. Ĕç тăваканнине кăтартнă чух предложенире подлежащи пулать. | *Трактор сухалать.* |
| 2. Камăнлăх | Япала камăннине е ĕçе камăн тумаллине пĕлтерет. | *Йыттăн хӳри кукăр, пуянăн – алли.* (Ват. сăм.) *Пиччен ыран хулана каймалла.* |
| 3. Пару | Кама е мĕне панине, ăçта кайнине е ĕç пĕр-пĕр япала çине куçнине, унпа çыхăннине кăтартать. | *Юлташа кĕнеке парнелерĕм. Вĕсем кинона кайрĕç. Ку повеçе эсĕ вуланă-и?* |
| 4. Вырăн | Япала е ĕç вырăнне пĕлтерет. | *Пичче Шупашкарта вĕренет. Хурлăханта витамин нумай.* |
| 5. Туху | Ăçтан тухнине, камран илнине, мĕнрен тунине, танлаштарнине т.ыт.те пĕлтерет. | *Анне хуларан таврăнчĕ. Лашаран çӳллĕ, курăкран лутра.* (Туп. юмах.) |
| 6. Пĕрлелĕх | Ĕçе кампа пĕрле, мĕнле хатĕрпе тунине, ĕçĕн вырăнне кăтартать. | *Эпĕ юлташсемпе кăмпана кайрăм. Тырра комбайнпа выраççĕ.* |
| 7. Çуклăх | Ĕçе камсăр е мĕнсĕр тунине пĕлтерет. | *Кăçал пахчана тракторсăрах сухаларăмăр.* |
| 8. Пирке | Ĕçе мĕн пирки е мĕнле тĕллевпе тунине пĕлтерет. | *Çумăршăнах ăмăрту кая юлса пуçланчĕ. Эпир миршĕн кĕрешетпĕр.* |

# ЯПАЛА ЯЧĔСЕН ВĔÇЛЕНĔВĔ

## Хупă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ

| Падеж | Пĕррелле хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| Тĕп | *юлташ* | *юлташсем* |
| Камăнлăх | *юлташăн* | *юлташсен* |
| Пару | *юлташа* | *юлташсене* |
| Вырăн | *юлташра* | *юлташсенче* |
| Туху | *юлташран* | *юлташсенчен* |
| Пĕрлелĕх | *юлташпа* | *юлташсемпе* |
| Çуклăх | *юлташсăр* | *юлташсемсĕр* |
| Пирке | *юлташшăн* | *юлташсемшĕн* |

Ч-40607



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

| Падеж | Пĕрреллĕ хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| Тĕп<br>Камăнлăх<br>Пару<br>Вырăн<br>Туху<br>Пĕрлелĕх<br>Çуклăх<br>Пирке | *площадь*<br>*площадĕн*<br>*площаде*<br>*площадьре*<br>*площадьрен*<br>*площадьпе*<br>*площадьсĕр*<br>*площадьшĕн* | *площадьсем*<br>*площадьсен*<br>*площадьсене*<br>*площадьсенче*<br>*площадьсенчен*<br>*площадьсемпе*<br>*площадьсемсĕр*<br>*площадьсемшĕн* |

## *Л, ль, н, нь* сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ

| Падеж | Тĕслĕхсем | | | |
|---|---|---|---|---|
| Тĕп<br>Камăнлăх<br>Пару<br>Вырăн<br><br>Туху<br><br>Пĕрлелĕх<br>Çуклăх<br>Пирке | *хурал*<br>*хуралăн*<br>*хурала*<br>*хуралта*<br>*хуралра*<br>*хуралтан*<br>*хуралран*<br>*хуралпа*<br>*хуралсăр*<br>*хуралшăн* | *кукăль*<br>*кукăлĕн*<br>*кукăле*<br>*кукăльте*<br>*кукăльре*<br>*кукăльтен*<br>*кукăльрен*<br>*кукăльпе*<br>*кукăльсĕр*<br>*кукăльшĕн* | *капан*<br>*капанăн*<br>*капана*<br>*капанта*<br>*капанра*<br>*капантан*<br>*капанран*<br>*капанпа*<br>*капансăр*<br>*капаншăн* | *мăкăнь*<br>*мăкăнĕн*<br>*мăкăне*<br>*мăкăньте*<br>*мăкăньре*<br>*мăкăньтен*<br>*мăкăньрен*<br>*мăкăньпе*<br>*мăкăньсĕр*<br>*мăкăньшĕн* |

## *А, е* сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ

| Падеж | Тĕслĕхсем | |
|---|---|---|
| Тĕп<br>Камăнлăх<br>Пару<br>Вырăн<br>Туху<br>Пĕрлелĕх<br>Çуклăх<br>Пирке | *çăка*<br>*çăкан*<br>*çăкана*<br>*çăкара*<br>*çăкаран*<br>*çăкапа*<br>*çăкасăр*<br>*çăкашăн* | *вĕрене*<br>*вĕренен*<br>*вĕренене*<br>*вĕренере*<br>*вĕренерен*<br>*вĕренепе*<br>*вĕренесĕр*<br>*вĕренешĕн* |

## *Ă, ĕ* сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ

| Падеж | Тĕслĕхсем | |
|---|---|---|
| Тĕп<br>Камăнлăх<br>Пару<br>Вырăн<br>Туху<br>Пĕрлелĕх<br>Çуклăх<br>Пирке | *пулă*<br>*пуллăн*<br>*пулла*<br>*пулăра*<br>*пулăран*<br>*пулăпа*<br>*пулăсăр*<br>*пулăшăн* | *сĕлĕ*<br>*сĕллĕн*<br>*сĕлле*<br>*сĕлĕре*<br>*сĕлĕрен*<br>*сĕлĕпе*<br>*сĕлĕсĕр*<br>*сĕлĕшĕн* |

## *У, ӳ* сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ

| Падеж | Тĕслĕхсем | |
|---|---|---|
| Тĕп | *çыру* | *пĕлӳ* |
| Камăнлăх | *çырăвăн* | *пĕлĕвĕн* |
| Пару | *çырăва* | *пĕлĕве* |
| Вырăн | *çырура* | *пĕлӳре* |
| Туху | *çыруран* | *пĕлӳрен* |
| Пĕрлелĕх | *çырупа* | *пĕлӳпе* |
| Çуклăх | *çырусăр* | *пĕлӳсĕр* |
| Пирке | *çырушăн* | *пĕлӳшĕн* |

## *И* сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ

| Падеж | Тĕслĕхсем | | |
|---|---|---|---|
| Тĕп | *пăри* | *станци* | *Канаш станцийĕ* |
| Камăнлăх | *пăрин* | *станцин* | *Канаш станцийĕн* |
| Пару | *пăрие* | *станцие(-й-э)* | *Канаш станцине* |
| Вырăн | *пăрире* | *станцире* | *Канаш станцинче* |
| Туху | *пăрирен* | *станцирен* | *Канаш станцинчен* |
| Пĕрлелĕх | *пăрипе* | *станципе* | *Канаш станцийĕпе* |
| Çуклăх | *пăрисĕр* | *станцисĕр* | *Канаш станцийĕсĕр* |
| Пирке | *пăришĕн* | *станцишĕн* | *Канаш станцийĕшĕн* |

## Тĕрлĕ сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен камăнлăхпа пару падежĕсенчи вĕçленӳ уйрăмлăхĕсем

| Мĕнле сасăпа пĕтеççĕ | Мĕнле улшăнусем пулса иртеççĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| ***а, е*** | 1) камăнлăх падежĕнче аффиксри *ă(ĕ)* сасă тухса ӳкет<br>2) пару падежĕнче сăмах тĕпĕпе аффикс хушшине ***н*** сасă кĕрсе ларать | *лаша-н, кĕнеке-н, ĕне-н, çырма-н*<br>*лаша-н-а, кĕнеке-н-е, ĕне-н-е, çырма-н-а* |
| ***ă, ĕ*** (умĕн пĕр хупă сасă) | *ă, ĕ* умĕнчи хупă сасă вăрăмланать, ăна икĕ пĕр пек сас паллипе палăртмалла | *атă – аттăн, атта; пулă – пуллăн, пулла; сĕлĕ – сĕллĕн, сĕлле; кӳлĕ – кӳллĕн, кӳлле* |
| ***у, ӳ*** | *у, ӳ* сасăсем *ăв, ĕв* сасăсемпе ылмашăнаççĕ | *çыру – çырăвăн, çырăва; пĕлӳ – пĕлĕвĕн, пĕлĕве; вĕренӳ – вĕренĕвĕн, вĕренĕве* |
| ***и*** | камăнлăх падежĕнче аффиксри *ĕ* сасă тухса ӳкет<br>пару падежĕнче аффикс *е (йэ)* | *тăри-н, шăши-н, пăри-н*<br>*тăрие, шăшие, пăрие* |

## ПАЛЛӐ ЯЧĔ

Япала е ĕç паллине пĕлтерекен сăмахсене **паллă ячĕсем** теççĕ. Ыйтăвĕ: ***мĕнле?***

Тĕслĕхсем: *кăвак* чечек, *хитре* тутăр, *шурă* юр, *чипер* ача, *ырă* çын, *сенкер* тӳпе, *тарăн* кӳлĕ.

### Паллă ячĕсен пулăвĕ

| Пулăвĕ енчен ушкăнлани | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Пĕрремĕшле паллă ячĕсем | *хĕрлĕ, сарă, кăвак, пысăк, чее, хаяр, чипер, çăра* |
| 2. Иккĕмĕшле паллă ячĕсем | *пылак, çаврака, шывак, йӳçек, типĕ, хупă, хĕсĕк, чĕвĕлти, каппайчăк* |

### Паллă ячĕсене тăвакан аффикссем

| Аффикссем | Мĕнле пуплев пайĕ çумне хушăнаççĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| ***-ак(-ек)*** | япала ячĕ<br>паллă ячĕ | *пылак, шывак*<br>*йӳçек, шĕвек* |
| ***-ăк(-ĕк)*** | глагол | *катăк, чĕрĕк, хуçăк, çĕрĕк, хăрăк* |
| ***-ă(-ĕ)*** | глагол | *уçă, йӳçĕ, шĕвĕ, çутă, хупă, выçă* |
| ***-ти*** | евĕрлев сăмахĕ | *чĕвĕлти, лăпăрти, çатăрти, мăрăлти* |
| ***-амас(-емес)*** | япала ячĕ<br>паллă ячĕ | *хăлхамас, çилхемес, çӳçлемес, тĕклемес, хĕрлемес* |
| ***-ашка(-ешке)*** | паллă ячĕ | *кăтрашка, çемçешке, çӳхешке* |
| ***-ка(-ке)*** | паллă ячĕ<br>евĕрлев сăмахĕ | *чăмăркка, çаврака, чиперкке*<br>*йăлтăркка, тăпăлкка* |
| ***-чăк(-чĕк)*** | глагол | *мухтанчăк, ӳркенчĕк, пăтранчăк* |
| ***-ака(-еке)*** | глагол | *сарлака, çаврака, пĕтреке* |
| ***-кăн(-кĕн)*** | глагол | *çăткăн, вĕçкĕн* |

### Паллă ячĕсен танлаштару степенĕсем

| Степеньсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Тĕп (паллă ячĕн пуçламăш форми) | *пысăк, пĕчĕк, мăнтăр, йывăр, шурă, кăвак, чипер, ешĕл, çутă* |
| 2. Танлаштаруллă | *пысăкрах, пĕчĕкрех, мăнтăртарах, йывăртарах, шурăрах, кăвакрах, чипертерех, ешĕлрех* |
| 3. Вăйлă | а) *шап-шурă, кăн-кăвак, сап-сарă, сип-симĕс, тăп-тăрă, ем-ешĕл*<br>ă) *сарă-сарă, шурă-шурă, тăрă-тăрă, пĕчĕк-пĕчĕк, хĕрлĕ-хĕрлĕ* |

### Танлаштаруллă степень пулăвĕ

| | Сăмах мĕнле сасăпа пĕтет | Аффикс | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| 1. | ***р*** сасăпа | *-тарах(-терех)* | *йывăртарах, чипертерех, тăвăртарах, самăртарах* |
| 2. | ***й, л, н*** сасăсемпе | *-рах(-рех), -тарах(-терех)* | *нумайрах – нумайтарах, хулăнрах – хулăнтарах, çăмăлрах – çăмăлтарах, тарăнрах – тарăнтарах* |
| 3. | Ытти сасăсемпе | *-рах(-рех)* | *çĕнĕрех, пысăкрах, пĕчĕкрех, симĕсрех, кăвакрах* |

### Паллă ячĕсен палăрту форми

**Палăрту форми** – паллă ячĕсен япала паллине палăртса, уйăрса кăтартакан форми. Вăл икĕ тĕрлĕ пулать:

1) ***-и*** аффикслă форма: *пысăкки, çирĕппи, хĕрли, сарри, çĕнни, лайăххи, кивви, чиперри;*

2) ***-скер*** аффикслă форма: *пысăкскер, çирĕпскер, хĕрлĕскер, çĕнĕскер, лайăхскер.*

### Палăрту форминчи паллă ячĕсен вĕçленĕвĕ

| Падеж | Пĕрреллĕ хисеп | | Нумайлă хисеп | |
|---|---|---|---|---|
| Тĕп | *çĕнни* | *çĕнĕскер* | *çĕннисем* | *çĕнĕскерсем* |
| Кам. | *çĕннин* | *çĕнĕскерĕн* | *çĕннисен* | *çĕнĕскерсен* |
| Пару | *çĕннине* | *çĕнĕскере* | *çĕннисене* | *çĕнĕскерсене* |
| Вырăн | *çĕннинче* | *çĕнĕскерте* | *çĕннисенче* | *çĕнĕскерсенче* |
| Туху | *çĕннинчен* | *çĕнĕскертен* | *çĕннисенчен* | *çĕнĕскерсенчен* |
| Пĕрл. | *çĕннипе* | *çĕнĕскерпе* | *çĕннисемпе* | *çĕнĕскерсемпе* |
| Çукл. | *çĕннисĕр* | *çĕнĕскерсĕр* | *çĕннисемсĕр* | *çĕнĕскерсемсĕр* |
| Пирке | *çĕннишĕн* | *çĕнĕскершĕн* | *çĕннисемшĕн* | *çĕнĕскерсемшĕн* |

## ХИСЕП ЯЧĔ

Япаласен шутне, йĕркине пĕлтерекен пуплев пайне **хисеп ячĕ** теççĕ. Ыйтăвĕсем: ***миçе? миçемĕш? миçешер? миçен?***

### Хисеп ячĕсен ушкăнĕсем

| Хисеп ячĕсен ушкăнĕсем | Ыйтăвĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Шут (тулли форма) | миçе? | *пĕрре, иккĕ, виççĕ...* |
| (кĕске форма) | | *пĕр, икĕ, виçĕ...* |
| Валеçÿ | миçешер? | *пĕр-ер, ик-шер, вун пĕр-шер...* |
| Йĕрке | миçемĕш? хăш? | *пĕрре-мĕш, иккĕ-мĕш, виççĕ-мĕш...* |
| Пĕтĕмлетÿ | миçен? | *пĕчче-н, иккĕ-н, виççĕ-н...* |

### Хисеп ячĕсен вĕçленĕвĕ

| Падеж | Шут хисеп ячĕсем | | |
|---|---|---|---|
| Тĕп | *пĕрре* | *пиллĕк* | *вун улттă* |
| Кам. | *пĕррен* | *пиллĕкĕн* | *вун улттăн* |
| Пару | *пĕррене* | *пиллĕке* | *вун ултта* |
| Вырăн | *пĕррере* | *пиллĕкре* | *вун улттăра* |
| Туху | *пĕрререн* | *пиллĕкрен* | *вун улттăран* |
| Пĕрл. | *пĕррепе* | *пиллĕкпе* | *вун улттăпа* |
| Çукл. | *пĕрресĕр* | *пиллĕксĕр* | *вун улттăсăр* |
| Пирке | *пĕррешĕн* | *пиллĕкшĕн* | *вун улттăшăн* |

| Йĕрке хисеп ячĕсем | | |
|---|---|---|
| Падеж | Пĕрреллĕ хисеп | Нумайлă хисеп |
| Тĕп | *вуннăмĕш* | *вуннăмĕшсем* |
| Камăнлăх | *вуннăмĕшĕн* | *вуннăмĕшсен* |
| Пару | *вуннăмĕшне* | *вуннăмĕшсене* |
| Вырăн | *вуннăмĕшĕнче* | *вуннăмĕшсенче* |
| Туху | *вуннăмĕшĕнчен* | *вуннăмĕшсенчен* |
| Пĕрл. | *вуннăмĕшпе* | *вуннăмĕшсемпе* |
| Çукл. | *вуннăмĕшсĕр* | *вуннăмĕшсемсĕр* |
| Пирке | *вуннăмĕшшĕн* | *вуннăмĕшсемшĕн* |

### Сăпат форминчи шут хисеп ячĕсем вĕçленни

| Падеж | 1-мĕш сăпат | 2-мĕш сăпат | 3-мĕш сăпат |
|---|---|---|---|
| Тĕп | *виççĕмĕр* | *виççĕр* | *виççĕшĕ* |
| Кам. | *виççĕмĕрĕн* | *виççĕрĕн* | *виççĕшĕн* |
| Пару | *виççĕмĕре* | *виççĕре* | *виççĕшне* |
| Вырăн | *виççĕмĕрте* | *виççĕрте* | *виççĕшĕнче* |
| Туху | *виççĕмĕртен* | *виççĕртен* | *виççĕшĕнчен* |
| Пĕрл. | *виççĕмĕрпе* | *виççĕрпе* | *виççĕшĕпе* |
| Çукл. | *виççĕмĕрсĕр* | *виççĕрсĕр* | *виççĕшĕсĕр* |
| Пирке | *виççĕмĕршĕн* | *виççĕршĕн* | *виççĕшĕшĕн* |

## МЕСТОИМЕНИ

Япала ячĕ, паллă ячĕ, хисеп ячĕ вырăнне усă куракан пуплев пайне **местоимени** теççĕ.

Местоименисен ыйтăвĕсем япала, паллă тата хисеп ячĕсенни евĕр пулаççĕ.

## Местоименисен ушкӑнӗсем

| | Местоименисен ушкӑнӗсем | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| 1. | Сӑпат | *эпӗ, эсӗ, вӑл; эпир, эсир, вӗсем* |
| 2. | Таврӑну | *хам, ху, хӑй; хамӑр, хӑвӑр, хӑйсем* |
| 3. | Кӑтарту | *ку, ҫак(ӑ), ҫав(ӑ), леш(ӗ)* |
| 4. | Ыйту | *кам, мӗн, хӑш, епле, мӗнле, миҫе* |
| 5. | Ҫуклӑх | *никам, нимӗн (ним), нимӗнле (нимле), ниепле, нихӑш* |
| 6. | Паллӑ мар | *такам, темӗн (тем), темӗнле (темле), тепле, тахӑш, темиҫе* |
| 7. | Паллӑ | *пур, пурте, кашни, пӗтӗм, тепӗр, харпӑр* |

## Сӑпат местоименийӗсемпе таврӑну местоименийӗсен пӗрпеклӗхӗсем

| Местоименисен ушкӑнӗсем | Хисеп | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | пӗрреллӗ | | | нумайлӑ | | |
| | Сӑпат | | | | | |
| | 1-мӗш | 2-мӗш | 3-мӗш | 1-мӗш | 2-мӗш | 3-мӗш |
| Сӑпат | *эпӗ* | *эсӗ* | *вӑл* | *эпир, эпӗр* | *эсир, эсӗр* | *вӗсем* |
| Таврӑну | *хам* | *ху* | *хӑй* | *хамӑр* | *хӑвӑр* | *хӑйсем* |

## Ҫуклӑх местоименийӗсемпе паллӑ мар местоименисен пулӑвӗ

| Ыйту местоименийӗсем | Ҫуклӑх местоименийӗсем | Паллӑ мар местоименисем |
|---|---|---|
| *кам* | *ни-кам* | *та-кам* |
| *мӗн* | *ни-мӗн* | *те-мӗн* |
| | *ним* | *тем* |
| *мӗнле* | *ни-мӗнле* | *те-мӗнле* |
| | *ни-мле* | *те-мле* |
| *епле* | *ни-епле* | *те-пле* |
| *хӑш* | *ни-хӑш* | *та-хӑшӗ* |
| *миҫе* | | *те-миҫе* |

# МЕСТОИМЕНИСЕН ВĔҪЛЕНĔВĔ

## Сăпат местоименийĕсем

| Падеж | Хисеп | |
|---|---|---|
| | пĕрреллĕ | нумайлă |
| Тĕп | *эпĕ, эп* | *эп-ир, эп-ĕр* |
| Кам. | *ман-ăн, ман* | *п-ир-ĕн* |
| Пару | *ман-а* | *п-ир-е* |
| Вырăн | *ман-ра* | *п-ир-те, п-ир-ĕн-те* |
| Туху | *ман-ран* | *п-ир-тен, п-ир-ĕн-тен* |
| Пĕрл. | *ман-па* | *п-ир-ĕн-пе* |
| Ҫукл. | *ман-сăр* | *п-ир-ĕн-сĕр* |
| Пирке | *ман-шăн* | *п-ир-ĕн-шĕн* |

## Таврăну местоименийĕсем

| Падеж | 1-мĕш сăпат | 2-мĕш сăпат | 3-мĕш сăпат |
|---|---|---|---|
| Тĕп | *хам* | *ху* | *хăй* |
| Кам. | *хам-ăн* | *хă-в-ăн* | *хăй-ĕн* |
| Пару | *хам-а* | *хă-в-н-а* | *хăй-н-е* |
| Вырăн | *хам-ра* | *хă-в-ăн-та* | *хăй-ĕн-че* |
| Туху | *хам-ран* | *хă-в-ăн-тан* | *хăй-ĕн-чен* |
| Пĕрл. | *хам-па* | *ху-па (хă-в-ăн-па)* | *хăй-пе (хăй-ĕн-пе)* |
| Ҫукл. | *хам-сăр* | *ху-сăр (хă-в-ăн-сăр)* | *хăй-сĕр (хăй-ĕн-сĕр)* |
| Пирке | *хам-шăн* | *ху-шăн (хă-в-ăн-шăн)* | *хăй-шĕн (хăй-ĕн-шĕн)* |

## Кăтарту местоименийĕсем

| Падеж | Пĕрреллĕ хисеп | | | |
|---|---|---|---|---|
| Тĕп | *ку* | *ҫак(ă)* | *ҫав(ă)* | *леш-ĕ* |
| Кам. | *ку-н* | *ҫакă-н* | *ҫавă-н* | *леш-ĕ-н* |
| Пару | *ку-н-а* | *ҫак-н-а* | *ҫав-н-а* | *леш-н-е* |
| Вырăн | *ку-н-ра* | *ҫак-ăн-та* | *ҫав-ăн-та* | *леш-ĕн-че* |
| Туху | *ку-н-ран* | *ҫак-ăн-тан* | *ҫав-ăн-тан* | *леш-ĕн-чен* |
| Пĕрл. | *ку-н-па* | *ҫак-ăн-па* | *ҫав-ăн-па* | *леш-ĕн-пе* |
| Ҫукл. | *ку-н-сăр* | *ҫак-ăн-сăр* | *ҫав-ăн-сăр* | *леш-ĕн-сĕр* |
| Пирке | *ку-н-шăн* | *ҫак-ăн-шăн* | *ҫав-ăн-шăн* | *леш-ĕн-шĕн* |

## Ыйту местоименийӗсем

| Падеж | Пӗрреллӗ хисеп | | |
|---|---|---|---|
| Тӗп | *кам* | *мӗн* | *хăш-ӗ* |
| Кам. | *кам-ăн* | *мӗн-ӗн* | *хăш-ӗн* |
| Пару | *кам-а* | *мӗн-е* | *хăш-н-е* |
| Вырăн | *кам-ра* | *мӗн-ре* | *хăш-ӗн-че* |
| Туху | *кам-ран* | *мӗн-рен* | *хăш-ӗн-чен* |
| Пӗрл. | *кам-па* | *мӗн-пе* | *хăш-ӗн-пе* |
| Çукл. | *кам-сăр* | *мӗн-сӗр* | *хăш-ӗн-сӗр* |
| Пирке | *кам-шăн* | *мӗн-шӗн* | *хăш-ӗн-шӗн* |

| Падеж | Нумайлă хисеп | | |
|---|---|---|---|
| Тӗп | *кам-сем* | *мӗн-сем* | *хăш-ӗ-сем* |
| Кам. | *кам-сен* | *мӗн-сен* | *хăш-ӗ-сен* |
| Пару | *кам-сен-е* | *мӗн-сен-е* | *хăш-ӗ-сен-е* |
| Вырăн | *кам-сен-че* | *мӗн-сен-че* | *хăш-ӗ-сен-че* |
| Туху | *кам-сен-чен* | *мӗн-сен-чен* | *хăш-ӗ-сен-чен* |
| Пӗрл. | *кам-сем-пе* | *мӗн-сем-пе* | *хăш-ӗ-сем-пе* |
| Çукл. | *кам-сем-сӗр* | *мӗн-сем-сӗр* | *хăш-ӗ-сем-сӗр* |
| Пирке | *кам-сем-шӗн* | *мӗн-сем-шӗн* | *хăш-ӗ-сем-шӗн* |

## Паллă мар тата паллă местоименисем

| Падеж | Паллă мар | | Паллă |
|---|---|---|---|
| Тӗп | *хăш-пӗри* | *хăшӗ-пӗри* | *пурте* |
| Кам. | *хăш-пӗрин* | *хăшӗ(н)-пӗрин* | *пурин те* |
| Пару | *хăш-пӗрне* | *хăшне-пӗрне* | *пурне те* |
| Вырăн | *хăш-пӗринче* | *хăшӗ-пӗринче* | *пуринче те* |
| Туху | *хăш-пӗринчен* | *хăшӗ-пӗринчен* | *пуринчен те* |
| Пӗрл. | *хăш-пӗринпе* | *хăшӗ-пӗринпе* | *пуринпе те* |
| Çукл. | *хăш-пӗринсӗр* | *хăшӗ-пӗринсӗр* | *пуринсӗр те* |
| Пирке | *хăш-пӗриншӗн* | *хăшӗ-пӗриншӗн* | *пуриншӗн те* |

## ГЛАГОЛ

Ĕçе-хĕле пĕлтерекен сăмахсене **глаголсем** теççĕ. Ыйтăвĕсем: ***мĕн тăвать? мĕн турĕ? мĕн тăвĕ?***

## Глаголсен ушкăнĕсем

| Ушкăнсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Ĕç | *тат, çых, ту, ларт, купала, çыр, тупта, çак, чутла, пичетле, выр, авăрт, вĕрен* |
| 2. Куçăм | *чуп, çӳре, çит, иш, чăм, вĕç, ут, кил, пыр, кай, хăпар, ан, улăх, кĕр, тух, ярăн, куç, сĕтĕрĕн, юх, упален, çаврăн* |
| 3. Тăрăм | *чечеклен, çывăр, тĕлĕр, кан, тăр, вырт, лар, чирле, сывал, сарал, шурал, симĕслен, ӳс* |
| 4. Пуплев | *кала, кăшкăр, çухăр, мăкăртат, хуш, пăшăлтат, сăмахла, юмахла, пупле, чĕн, хирĕçле, ăнлантар, ыйт* |
| 5. Сисĕм | *илт, итле, шăршла, туй, сис, астив, тутан, сăна, пăх, кур, куçла* |
| 6. Шухăшлав | *шухăшла, шутла, тăнла, ăнла, тăнлан, ăслан, асту, пĕл, чухла, ăнкар, ман* |
| 7. Общество пулăмĕн | *пĕрлеш, кĕреш, çапăç, митингла* |
| 8. Кăмăл | *савăн, хĕпĕрте, тарăх, çиллен, кулян, тунсăхла, йĕр, макăр* |

## Глаголсен пулăвĕ

| | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Пĕрремĕшле глаголсем – глагол тымарĕсем | *кай, кил, лар, çи, пĕл, ыйт, тыт, пар, пер, тух, кĕт* |
| 2. Иккĕмĕшле глаголсем – тĕрлĕ пуплев пайĕ çумне аффикссем хушăннипе пулнă глаголсем | *савала, туслаш, вăйлан, нартлат, нăриклет, çыртар, вĕрент* |

## Иккĕмĕшле глаголсем

| Аффикссем | Мĕнле пуплев пайĕ çумне хушăнаççĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 |
| ***-ла(-ле)*** | япала ячĕ<br>паллă ячĕ<br>евĕрлев сăмахĕ | *пичетле, вĕренле, сăрла, хупла*<br>*пахала, тикĕсле*<br>*нăрла, сĕрле, ӳле, йăсла, мăрла* |
| ***-лан(-лен)*** | япала ячĕ<br>паллă ячĕ | *вăйлан, пăрлан, çеçкелен, ĕмĕтлен*<br>*йăвашлан, аванлан, патварлан, хаярлан* |
| ***-лаш(-леш)*** | япала ячĕ<br>паллă ячĕ | *туслаш, мирлеш, тавлаш, майлаш*<br>*танлаш, ваклаш* |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| ***-лат (-лет)*** | япала ячĕ | *чăвашлат, ушкăнлат, илемлет, тĕреклет* |
| | паллă ячĕ | *ăшăхлат, тĕссĕрлет, ансатлат, нумайлат* |
| | евĕрлев сăмахĕ | *вĕслет, нăриклет, хашлат, хартлат* |
| ***-ăн(-ĕн), -н*** | япала ячĕ | *йышăн, пуçăн, тутан, вăтан* |
| | паллă ячĕ | *сивĕн, ăшăн, йĕпен, пушан* |
| | глагол | *шăлăн, лӳчĕркен, çапăн, çырăн* |
| ***-ăл(-ĕл), -л*** | паллă ячĕ | *тасал, кукăрăл, якал, кĕскел* |
| | глагол | *çăрăл, сирĕл, сарăл, тăсăл* |
| ***-ăш(-ĕш),*** | глагол | *сĕкĕш, хĕвĕш* |
| ***-аш(-еш), -ш*** | глагол | *çухăраш, саламлаш* |
| ***-ăç(-ĕç), -ç*** | глагол | *манăç, тытăç, калаç, çапăç* |
| ***-т, -ар(-ер)*** | глагол | *вĕрент, каçар, ӳкер, васкат* |
| ***-тар(-тер)*** | глагол | *пĕлтер, çыртар, çитер* |
| ***-ттар(-ттер)*** | глагол | *шухăшлаттар, вулаттар* |
| ***-ка(-ке)*** | евĕрлев сăмахĕ | *чапка, хашка, такка, пашка* |
| ***-кăш(-кĕш)*** | евĕрлев сăмахĕ | *ялкăш, вĕлкĕш, вĕркĕш, нăйкăш* |
| ***-тат(-тет)*** | евĕрлев сăмахĕ | *пăшăлтат, шĕпĕлтет, лĕпĕртет, ахăлтат, мĕшĕлтет* |

## Глаголсен пурлă тата çуклă формисем

| Глагол формисем | Мĕнле аффикспа пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. Пурлă форма – ĕç пулнине пĕлтерекен форма | Аффиксĕ çук | *çыратăп*<br>*çыртăм*<br>*çырăп* |
| 2. Çуклă форма – ĕç пулманнине пĕлтерекен форма | ***-мас(-мес)***<br>***-ма(-ме)***<br>***-м*** | *çырмастăп*<br>*çырмарăм*<br>*çырмăп* |

## Глаголсен сăпатлă тата сăпатсăр (сăпатлă мар) формисем

| Формăсем | Улшăну |
|---|---|
| 1. Сăпатлă формăсем | Наклонени, вăхăт, хисеп тата сăпат тăрăх улшăнаççĕ. |
| 2. Сăпатсăр (сăпатлă мар) формăсем: инфинитив, причасти тата деепричасти | Хисеп тата сăпат тăрăх улшăнмаççĕ. |

### Глаголсен сăпачĕсем

| Сăпат | Пĕлтерĕшсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1-мĕш | Калаканни ĕçе хăй тунине пĕлтерет | *вулатăп, итлетĕп; вуларăм, итлерĕм* |
| 2-мĕш | Ĕçе, кампа калаçатăн, çавă тунине пĕлтерет | *вулатăн, итлетĕн; вуларăн, итлерĕн* |
| 3-мĕш | Ĕçе, кам çинчен калаçатăр, çавă тунине пĕлтерет | *вулать, итлет; вуларĕ, итлерĕ* |

## ГЛАГОЛСЕН НАКЛОНЕНИЙĔСЕМ

**Наклонени** – калаканни ĕç çине мĕнле пăхнине кăтартакан глагол форми. Чăваш чĕлхинче 4 наклонени: кăтарту, ĕмĕт, хушу, килĕшӳ.

### Кăтарту наклоненийĕ




### Хальхи вăхăт

| Сăпат | Пĕрреллĕ хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| | Пурлă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-ат-ăп* | *çыр-ат-п-ăр* |
| 2-мĕш | *çыр-ат-ăн* | *çыр-ат-V-ăр* |
| 3-мĕш | *çыр-ать-V* | *çыр-аç-ç-ĕ* |
| | Çуклă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-мас-т-ăп* | *çыр-мас-т-п-ăр* |
| 2-мĕш | *çыр-мас-т-ăн* | *çыр-мас-т-V-ăр* |
| 3-мĕш | *çыр-мас-ть-V* | *çыр-маç-V-ç-ĕ* |

### Пулас вăхăт

| Сăпат | Пĕрреллĕ хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| | Пурлă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-ăп* | *çыр-ăп-ăр* |
| 2-мĕш | *çыр-ăн* | *çыр-V-ăр* |
| 3-мĕш | *çыр-ĕ* | *çыр-ĕ-ç* |
| | Çуклă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-м-ăп* | *çыр-м-ăп-ăр* |
| 2-мĕш | *çыр-м-ăн* | *çыр-м-V-ăр* |
| 3-мĕш | *çыр-м-ĕ* | *çыр-м-ĕ-ç* |

## ИРТНĔ ВĂХĂТ

### Пĕрре иртнĕ вăхăт

| Сăпат | Пĕрреллĕ хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| | Пурлă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-т-ăм* | *çыр-т-ăм-ăр* |
| 2-мĕш | *çыр-т-ăн* | *çыр-т-V-ăр* |
| 3-мĕш | *çыр-ч-ĕ* | *çыр-ч-ĕ-ç* |
| | Çуклă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-ма-р-ăм* | *çыр-ма-р-ăм-ăр* |
| 2-мĕш | *çыр-ма-р-ăн* | *çыр-ма-р-V-ăр* |
| 3-мĕш | *çыр-ма-р-ĕ* | *çыр-ма-р-ĕ-ç* |

### Темиçе иртнĕ вăхăт

| Сăпат | Пĕрреллĕ хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| | Пурлă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-атт-ăм (-ччĕ)* | *çыр-атт-ăм-ăр (-ччĕ)* |
| 2-мĕш | *çыр-атт-ăн (-ччĕ)* | *çыр-атт-V-ăр (-ччĕ)* |
| 3-мĕш | *çыр-атч-ĕ* | *çыр-атч-ĕ-ç* |
| | Çуклă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-мас-т-ăм (-ччĕ)* | *çыр-мас-т-ăм-ăр (-ччĕ)* |
| 2-мĕш | *çыр-мас-т-ăн (-ччĕ)* | *çыр-мас-т-V-ăр (-ччĕ)* |
| 3-мĕш | *çыр-мас-тч-ĕ* | *çыр-мас-тч-ĕ-ç* |

## Ёмĕт наклоненийĕ

| Сăпат | Пĕрреллĕ хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| | Пурлă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-ăтт-ăм (-ччĕ)* | *çыр-ăтт-ăм-ăр (-ччĕ)* |
| 2-мĕш | *çыр-ăтт-ăн (-ччĕ)* | *çыр-ăтт-V-ăр (-ччĕ)* |
| 3-мĕш | *çыр-ĕчч-ĕ* | *çыр-ĕчч-ĕ-ç* |
| | Çуклă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-м-ăтт-ăм (-ччĕ)* | *çыр-м-ăтт-ăм-ăр (-ччĕ)* |
| 2-мĕш | *çыр-м-ăтт-ăн (-ччĕ)* | *çыр-м-ăтт-V-ăр (-ччĕ)* |
| 3-мĕш | *çыр-м-ĕчч-ĕ* | *çыр-м-ĕчч-ĕ-ç* |

## Хушу наклоненийĕ

| Сăпат | Пĕрреллĕ хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| | Пурлă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-а-м* | *çыр-а-V-р* |
| 2-мĕш | *çыр-V-V* | *çыр-V-V-ăр* |
| 3-мĕш | *çыр-тăр-V* | *çыр-ччăр-V-V* |
| | Çуклă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-а-м мар* | *çыр-а-V-р мар* |
| 2-мĕш | *ан çыр-V-V* | *ан çыр-V-V-ăр* |
| 3-мĕш | *ан çыр-тăр-V* | *ан çыр-ччăр-V* |

## Килĕшӳ наклоненийĕ

| Сăпат | Пĕрреллĕ хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| | Пурлă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-ăп-ин* | *çыр-ăп-ăр-ин* |
| 2-мĕш | *çыр-ăсă-н* | *çыр-ăсă-V-р* |
| 3-мĕш | *çыр-V-ин* | *çыр-ĕ-ç-ин* |
| | Çуклă форма | |
| 1-мĕш | *çыр-м-ăп-ин* | *çыр-м-ăп-ăр-ин* |
| 2-мĕш | *çыр-м-ăсă-н* | *çыр-м-ăсă-V-р* |
| 3-мĕш | *çыр-м-V-ин* | *çыр-м-ĕ-ç-ин* |

## ИНФИНИТИВ

**Инфинитив** – сӑпат, хисеп, вӑхӑт тата наклонени тӑрӑх улшӑнман глагол форми. Вӑл глагол тӗпӗ ҫумне ***-ма(-ме)*** е ***-машкӑн(-мешкӗн)*** аффикссем хушӑннипе пулать: *ҫыр-ма, ҫыр-машкӑн; ӗҫле-ме, ӗҫле-мешкӗн.*

| Сӑпат | Тӗслӗхсем |
|---|---|
| | Пӗрреллӗ хисеп |
| 1-мӗш | *Эпӗ шкула **вӗренме** кайрӑм.* |
| 2-мӗш | *Эсӗ шкула **вӗренме** кайрӑн.* |
| 3-мӗш | *Вӑл шкула **вӗренме** кайрӗ.* |
| | Нумайлӑ хисеп |
| 1-мӗш | *Эпир шкула **вӗренме** кайрӑмӑр.* |
| 2-мӗш | *Эсир шкула **вӗренме** кайрӑр.* |
| 3-мӗш | *Вӗсем шкула **вӗренме** кайрӗҫ.* |

Инфинитивӑн ***-машкӑн(-мешкӗн)*** аффикслӑ форми фольклорпа поэзире ытларах тӗл пулать:

*Ҫыру **ҫырмашкӑн** аллӑм ҫуккӑ,*
*Шур хут парсан та шур аппа.*
*Ӗнер кӑна выртаттӑм суккӑр,*
*Паян куратӑп хам куҫпа.*

(В. Урташ.)

*Шӑкӑлчи юрлать, юрлать,*
***Итлемешкӗн** ҫеҫ пӗл.*
*Ав епле ӑна тӑнлать*
*Кӑвак куҫлӑ ҫеҫпӗл.*

(Ю. Сементер.)

## ПРИЧАСТИ

**Причасти** – япалан паллине кӑтартакан глаголӑн сӑпатланман форми. Вӑл виҫӗ вӑхӑтра тата пурлӑ, ҫуклӑ формӑсенче пулать.

| Причастисен вӑхӑчӗсем | Пурлӑ форма | Ҫуклӑ форма |
|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 |
| Хальхи причасти | *ҫыр-акан*<br>*итл(е)-екен* | *ҫыр-ма-н*<br>*итле-ме-н* |
| Иртнӗ причасти | *ҫыр-нӑ*<br>*итле-нӗ* | *ҫыр-ма-н*<br>*итле-ме-н* |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| Пулас причасти | *çыр-ас*<br>*итл(е)-ес* | *çыр-м(а)-ас*<br>*итле-м(е)-ес* |
| Пулмалли причасти | *çыр-малла*<br>*итле-мелле* | *çыр-малла мар*<br>*итле-мелле мар* |

## Причастисен палăрту формисем

| Причастисен вăхăчĕсем | Палăрту формисем | |
|---|---|---|
| | ***-и*** аффикс хушăннипе пулнисем | ***-скер*** аффикс хушăннипе пулнисем |
| Хальхи причасти | *çыр-аканн-и*<br>*итл(е)-екенн-и* | *çыр-акан-скер*<br>*итл(е)-екен-скер* |
| Иртнĕ причасти | *çыр-н(ă)-и*<br>*итле-н(ĕ)-и* | *çыр-нă-скер*<br>*итле-нĕ-скер* |
| Пулас причасти | *çыр-асс-и*<br>*итл(е)-есс-и* | *çыр-ас-скер*<br>*итл(е)-ес-скер* |
| Пулмалли причасти | *çыр-малл(а)-и*<br>*итле-мелл(е)-и* | *çыр-малла-скер*<br>*итле-мелле-скер* |

## Палăрту форминчи причастисен вĕçленĕвĕ

| Хисеп | Падеж | ***-и*** аффикс йышăннă иртнĕ причасти | ***-скер*** аффикс йышăннă иртнĕ причасти |
|---|---|---|---|
| Пĕрреллĕ | Тĕп | *çырни* | *çырнăскер* |
| | Кам. | *çырнин* | *çырнăскерĕн* |
| | Пару | *çырнине* | *çырнăскере* |
| | Вырăн | *çырнинче* | *çырнăскерте* |
| | Туху | *çырнинчен* | *çырнăскертен* |
| | Пĕрл. | *çырнипе* | *çырнăскерпе* |
| | Çукл. | *çырнисĕр* | *çырнăскерсĕр* |
| | Пирке | *çырнишĕн* | *çырнăскершĕн* |
| Нумайлă | Тĕп | *çырнисем* | *çырнăскерсем* |
| | Кам. | *çырнисен* | *çырнăскерсен* |
| | Пару | *çырнисене* | *çырнăскерсене* |
| | Вырăн | *çырнисенче* | *çырнăскерсенче* |
| | Туху | *çырнисенчен* | *çырнăскерсенчен* |
| | Пĕрл. | *çырнисемпе* | *çырнăскерсемпе* |
| | Çукл. | *çырнисемсĕр* | *çырнăскерсемсĕр* |
| | Пирке | *çырнисемшĕн* | *çырнăскерсемшĕн* |

# ДЕЕПРИЧАСТИ

**Деепричасти** – глаголăн улшăнман (сăпатсăр) форми, вăл тĕп ĕç çумĕнчи хушăмлă ĕçе пĕлтерет.

## Деепричастисен пулăвĕ

| Аффикссем | Пурлă форма | Çуклă форма | Танлаштарullă степенĕн форми |
|---|---|---|---|
| ***-са(-се)*** | *калаç-са*<br>*итле-се* | *калаç-ма-сăр*<br>*итле-ме-сĕр* | *тăрăш-са-рах*<br>*пĕл-се-рех* |
| ***-сан(-сен),***<br>***-сассăн(-сессĕн)*** | *вула-сан*<br>*(вула-сассăн)*<br>*кил-сен*<br>*(кил-сессĕн)* | *вула-ма-сан*<br>*(вула-ма-са-ссăн)*<br>*кил-ме-сен*<br>*(кил-ме-сессĕн)* | – |
| ***-а(-е)*** | *пыр-а, кул-а*<br>*пĕтер-е* | – | *сыхлан-а-рах*<br>*тĕлĕн-е-рех* |
| ***-иччен*** | *пĕл-иччен*<br>*курăн-иччен* | *пĕл-м-иччен*<br>*курăн-м-иччен* | – |
| ***-массерен***<br>***(-мессерен)*** | *кур-массерен*<br>*кил-мессерен* | – | – |

## Деепричастисен пĕлтерĕшĕсем

| Деепричастисен аффиксĕсем | Пĕлтерĕшĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| ***-са(-се)*** | Тепĕр ĕçĕн мĕнлелĕхĕ тата сăлтавĕ | *Хавасланса тапать чĕре* (Г.Орлов). *...Юр ирĕлчĕ васкаса* (К.Иванов). |
| ***-сан(-сен),***<br>***-сассăн(-сессĕн)*** | Тепĕр ĕçĕн вăхăчĕ е условийĕ | *Ыйăнсан ларса кантăмăр. Нумай пĕлсен час ватăлать теççĕ ваттисем.* |
| ***-иччен*** | Ĕç вăхăчĕ е виçи | *Ыйăниччен чупрăмăр. Каличчен тĕплĕ шухăшла.* |
| ***-а(-е)*** | Ку аффикслă деепричастие ытларах икĕ хут калаççĕ, вăл вăрăма тăсăлакан ĕçе пĕлтерет | *Вула-вула утрăмăр. Кула-кула калаçать.* |
| ***-массерен***<br>***(-мессерен)*** | Тепĕр ĕçпе пĕр вăхăтра пулакан ĕç | *Сыпмассерен аш кĕмест. (Ват. сăм.) Каймассерен пулăпа таврăнать.* |

## НАРЕЧИ

Ĕçĕн, япалан е паллăн паллине кăтартакан, ***мĕнле? хăçан? ăçта? мĕн тери? мĕн пирки?*** ыйтусенче тăракан пуплев пайне **наречи** теççĕ.

### Наречисене пĕлтерĕш енчен ушкăнлани

| Ушкăнсем | Наречисен ыйтăвĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. Мĕнлелĕх | мĕнле?<br>епле? | *аран, апла, сасартăк, харăс, тăрук, укçалла, вĕçе-вĕçĕн, кĕретĕн, хуллен, вăрах, ерипен* |
| 2. Вăхăт | хăçан?<br>хăçанччен?<br>хăçантанпа? | *ялан, çĕрле, пĕрмай, тин, халь, анчах, ĕнтĕ, кĕç, паçăр, халиччен, кăçал, пĕлтĕр, авал, нихçан, кĕçĕр, пирвай, ĕлĕк, виçмине* |
| 3. Вырăн | ăçта?<br>ăçталла?<br>ăçтан? | *кунта, кунтан, кунталла, лере, лерен, ниçта, ниçтан, ăçта, ăçтан, йĕри-тавра, калле* |
| 4. Виçе | мĕн чухлĕ?<br>мĕн таран?<br>мĕн тери? | *кăшт, ытла, пайтах, питĕ, тӳпеми, пăртак, пушшех, пуçĕпех, вуçех, тата(х), йăлтах, пачах, самай* |
| 5. Пиркепе тĕллев | мĕн пирки?<br>мĕншĕн? | *юри, ма, темме, ытахальтен, ахаль, ятарласа, таках, кăлăхах, ятне* |

### Наречисен пулăвĕ

| Ушкăнсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Пĕрремĕшлисем | *аран, сасартăк, харăс, ытла, питĕ, йăлт, ĕнер, ĕлĕк, тата, ма* |
| 2. Иккĕмĕшлисем (аффикс хушăннă сăмахсен форми çирĕпленсе ларнипе пулнисем) | *çуллен, куллен, виçмине, тăватмине, шăлами, ятне, лере, пĕртте* |

## НАРЕЧИСЕН ТАНЛАШТАРУ ФОРМИСЕМ

### Танлаштаруллă форма

| Наречисен ушкăнĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Мĕнлелĕх наречийĕ | *ерипентерех, хăвăртрах, тăрукрах* |
| 2. Вăхăт наречийĕ | *авалтарах, ĕлĕкрех, хальтерех, тинтерех, анчахрах, тăтăшрах* |
| 3. Вырăн наречийĕ | *кунтарах, лererех, унтарах, таçтарах* |

### Вайлă форма

Вайлă форма наречие икĕ хут каланипе пулать: *аран-аран, харăс-харăс, кĕç-кĕç, тин-тин, халь-халь, хăвăрт-хăвăрт.*

## ЕВĔРЛЕВ СĂМАХĔ

Çут çанталăкра пулса иртекен сас-чӳсене, хусканусене евĕрлесе кăтартакан, ***мĕнле?*** ыйтура тăракан пуплев пайне **евĕрлев сăмахĕ** теççĕ.

### Евĕрлев сăмахĕсен ушкăнĕсем

| Ушкăнсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Сас-чĕве евĕрлекеннисем | *шăнкăр-шăнкăр, нарт-нарт, шат, шарт, кăчăрт-кăчăрт, чĕвĕл-чĕвĕл, ши-и-и* |
| 2. Курăнакан пулăма евĕрлекеннисем | *йăлтăр, мăч-мăч, яри, йăлтăр-ялтăр, йăл-йăл, кăнн* |

## ХЫÇСĂМАХ

Вĕçленекен сăмаха предложенири тепĕр сăмахпа çыхăнтаракан пулăшу пуплев пайне **хыçсăмах** теççĕ.

### Хыçсăмахсен ушкăнĕсем

| Хыçсăмах мĕнле падеж форми хыççăн тăрать | Хыçсăмахсем |
|---|---|
| 1. Тĕп падежри ятпала ячĕ хыççăн | *урлă, валли, тавра, витĕр, евĕр, каçа (каçипе), май, пек, пирки* |
| 2. Камăнлăх падежĕнчи местоименисем хыççăн | *çинчен, тавра, тăрăх, таран, урлă, хута, яхăн, тери* |
| 3. Пару падежĕнчи сăмахсем хыççăн | *кура, çити, çитиччен, валли, хирĕç, пула, тăрăх, май, урлă, яхăн* |
| 4. Пĕрлелĕх падежĕнчи сăмахсем хыççăн | *пĕрле, юнашар* |
| 5. Туху падежĕнчи сăмахсем хыççăн | *вара, урăх, пуçне, пуçласа* |

## СОЮЗ

Пĕр йышши членсене е хутлă предложенин пайĕсене пĕр-пĕринпе çыхăнтаракан пулăшу пуплев пайне **союз** теççĕ.

### Союзсен ушкăнĕсем

| Ушкăнсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Сыпăнуллă союзсем: | |
| 1) сыпăнтару | *тата, ни-ни, та(те)* |
| 2) хирĕçлев | *анчах, çапах, ахальлĕн, атту* |
| 3) уйăру | *е, пĕр-пĕр, пĕрре-тепре* |
| 2. Пăхăнуллă союзсем: | |
| 1) пирке | *мĕншĕн тесен, ма тесен, тесе* |
| 2) тĕллев | *тесе* |
| 3) тĕллевпе услови | *тесен* |
| 4) килĕшӳ | *пулсан та, пулин те, хуть* |
| 5) услови | *пулсан, енчен, эхер* |

## ТАТĂК

Предложени членĕ е предложени çумне хушăнса вĕсен пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене кăтартакан пуплев пайне **татăк** теççĕ.

### Татăксен ушкăнĕсем

| Ушкăнсем | Татăксем |
|---|---|
| Çирĕплетӳ татăкĕсем | *ăхă, ия, ара* |
| Хирĕçлев татăкĕсем | *çук, мар, ан, ни* |
| Ыйту татăкĕсем | *а, е(э), -и, -ши, -им, -шим, нивушлĕ* |
| Услови татăкĕсем | *тăк (тĕк)* |
| Пĕтĕмлетӳ татăкĕсем | *-иç, -мĕн, имĕш, иккен, эппин* |
| Иккĕленӳ татăкĕсем | *ахăр, ахăртнех, тен, -тăр(-тĕр)* |
| Кăтарту татăкĕсем | *ак(ă), ав(ă), веç, вăт, вăн* |
| Тĕрĕслетӳ татăкĕсем | *шăп, лăп, лап* |
| Уйăру татăкĕсем | *çеç, çех, кăна, анчах* |
| Вăйлату татăкĕсем | *та (-те), ĕнтĕ, вĕт, чи, чăн* |
| Çемçетӳ татăкĕсем | *-ха, -çке* |

## МЕЖДОМЕТИ

Туйăма е хистеве ят памасăр пĕлтерекен пуплев пайне **междомети** теççĕ.

### Междометисен ушкӑнӗсем

| Ушкӑнсем | Тӗслӗхсем |
|---|---|
| 1. Туйӑм междометийӗсем | *эх, ах, ай, фу-у, урра, хурах, ых, уф, ай-тур-тур, ай-яй* |
| 2. Хистев междометийӗсем | *ну, эй, вӗси, хас, чух-чух, кӑшша, хаҫ, на, ме, прис, чип-чип-чип, тс-с, кӗс-кӗс* |
| 3. Кӑмӑллӑх междометийӗсем | *салам, тавтапуҫ, тавсье, аван-и, сывах-и, ырӑ кун* |

# ОРФОГРАФИ

### *Е, ё, ю, я* сас паллисене ҫырасси

***Е, ё, ю, я*** сас паллисене *йэ, йо, йу, йа* сасӑсене палӑртма ҫакӑн пек чухне ҫыраҫҫӗ: 1) сӑмах пуҫламӑшӗнче – *епле, ешӗл, ёлка, юман, япала;* 2) уҫӑ сас палли хыҫҫӑн: *ҫиет, заём, каюра, паян;* 3) ҫемҫелӗх палли хыҫҫӑн: *кӗсье, мӑрье, тухья, пьеса, Патӑрьел.*

**Асӑрхаттарни:** вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ хӑш-пӗр сӑмахсенче *йо* ҫырни тӗл пулать: *район, йод, майор, Йошкар-Ола.*

***Е, ё, ю, я*** сас паллисене умӗнчи хупӑ сасӑ ҫемҫен илтӗннине палӑртма ҫыраҫҫӗ, ун пек чух вӗсем *э, о, у, а* сасӑсене пӗлтереҫҫӗ: *телей, лётчик, сюжет, атя, тяпка, щётка.*

### *Э, о* сас паллисене ҫырасси

***Э*** сас паллине сӑмах пуҫламӑшӗнче тата уҫӑ сас палли хыҫҫӑн ҫыраҫҫӗ: *эпӗ, эсӗ, эпир, эсир, этем, поэзи, алоэ, дуэт.*

***О*** сас паллине вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ сӑмахсенче ҫеҫ ҫыраҫҫӗ: *опыт, океан, отличник, союз, помидор, пальто, кино.*

### Хупӑ сасӑсен ҫемҫелӗхне ҫырура палӑртни

**1.** Хытӑ сӑмахсен вӗҫӗнчи юлашки ҫемҫе хупӑ сасса ҫемҫелӗх палли (**ь**) ҫырса палӑртаҫҫӗ: *мӑкӑнь, кукӑль, супӑнь, ахаль, халь, куҫҫуль, канать, вулать.*

**2.** Ҫемҫе уҫӑ сасӑпа юнашар (умӗнче е хыҫҫӑн) тӑракан хупӑ сасӑсем яланах ҫемҫен илтӗнеҫҫӗ, апла пулин те вӗсенче **ь** ҫырмаҫҫӗ: *пӗлӗт, ҫӗмӗрт, кӗмӗл, вӗлтрен, тӗтреллӗ.*

**3.** Хытӑ сӑмах варринчи пӗртен-пӗр хупӑ сасӑ ҫемҫе пулсан ӑна ҫемҫелӗх паллипе кӑтартаҫҫӗ: *выльӑх, атьӑр, хуньӑм.*

**4.** Хупӑ сасӑ хыҫҫӑн *йэ, йо, йу, йа* сасӑсем илтӗннӗ чухне ***е, ё, ю, я*** сас паллисем умӗн **ь** ҫырмалла: *ҫемье, мӑрье, Марье, Сӑрьел, Воробьев, статья, статью.*

## Хупă сасăсем вăраммăн илтĕннине çырура палăртни

**1.** Вăраммăн илтĕнекен хупă сасса çырура икĕ пĕр пек сас паллипе палăртаççĕ: *аллă, паттăр, тĕттĕм, суккăр.*

**2.** Уçă тата *л* сасăпа пĕтекен сăмахсем çумне ***-лă(-лĕ), -ла(-ле)*** аффикс хушăнсан икĕ *л* çырмалла:

а) *кăшкăруллă, йăмраллă, укçаллă, хĕвеллĕ, кăмăллă, пăшаллă;*

ă) *ачалла, çутăлла, кивĕлле, пуканелле, футболла, кăшăлла.*

**3.** Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсен вĕçĕнче тĕп падежра икĕ пĕр пек хупă сас палли çыраççĕ: *класс, металл, грипп, процесс, Филипп.* Çак сăмахсенех ытти падеж формисенче пĕр хупă сас паллипе çырмалла.

***Б, г, д, ж, з, ф, ц, щ*** сас паллисене вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенче çеç çыраççĕ: *билет, герой, диктант, журнал, завод, цифра, план, щетка, съезд, подъезд, центнер, кофта, сцена.*

## *Çы, чы – çи, чи* çырасси

| | | |
|---|---|---|
| Хытă сас палли умĕн | *ы* | *çын, çых, çырма, тыту, çывăх, чылай, чыс, чышкă, çыран* |
| Çемçе сас палли умĕн | *и* | *çил, çинçе, çимĕç, çивĕч, çилĕм, чипер, чир, чик* |

## Пайăр ятсене çырасси

### I

**1.** Хула, ял ятне, çын хушаматне, ятне пысăк сас паллипе пуçласа çыраççĕ: *Шупашкар, Канаш; Андриян Николаев, Петĕр Хусанкай.*

**2.** Кĕнекесен, хаçатсемпе журналсен, картинăсен, кинофильмсен, спектакльсен, заводсемпе фабрикăсен, карапсен т.ыт. ячĕсене, пысăкран пуçласа çырнисĕр пуçне, кавычкăна хупаççĕ: *«Хыпар»* (хаçат), *«Ялав»* (журнал), *«Нарспи»* (поэма), *«Çеçпĕл»* (кинофильм), *«Кай-кай Ивана»* (спектакль), *«Контур»* (завод), *«Метеор»* (пăрахут).

**3.** Уявсемпе паллă кунсен, пысăк пĕлтерĕшлĕ документсен ячĕсенче пĕрремĕш сăмахне кăна пысăкран пуçласа çырмалла: *Çĕнĕ çул, Май уявĕ, Учитель кунĕ, Пичет кунĕ, Хисеп кĕнеки.*

**4.** Орденсемпе медальсен ячĕсенче *орден* тата *медаль* сăмахсене пĕчĕкрен çырмалла: *Александр Невский орденĕ, Ĕç Мухтавĕн орденĕ, «Хисеп палли» орден, Суворов медалĕ, «Ылтăн çăлтăр» медаль* т.ыт.те.

## II

Çынна пĕлтерекен пайăр ят çумне *-сем* аффикс хушăнсан, çав сăмаха пысăкран пуçласа çырмалла: ***Кольăсем пĕр кил урлă пурăнаççĕ.***

Географи ячĕ çумне *-сем* хушса каланă пулсан çав ята пĕчĕк сас паллинчен пуçласа çырмалла: ***Ĕçре мала тухнăшăн муркашсене ырларĕç.***

Кавычкăри пайăр ятсене нумайлă хисепре чухне пĕчĕкрен пуçласа çырмалла: *Государствăна сĕт сутассипе* ***«аврорăсем»*** *çĕнтерчĕç.*

### Камăнлăх формингчи япала ячĕсене çырасси

**1.** ***Ă, ĕ*** сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсенче, вĕсем умĕн пĕр хупă сасă çеç пулсан камăнлăх формисенче çав хупă сасă вăрăмланать, çырура ăна икĕ пĕр пек сас паллипе палăртмалла:

*пулă – пуллăм, пуллу, пулли*
*кĕвĕ – кĕввĕм, кĕввŭ, кĕвви*
*сăвă – сăввăм, сăвву, сăвви*

**Анчах:** *пыл тути, улăх ути, уйăх çути.*

**2.** ***Ă, ĕ*** сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсенче, вĕсем умĕн икĕ хупă сасă пулсан çав хупă сасăсем вăрăмланмаççĕ:

*кŭршĕ – кŭршĕм, кŭршŭ, кŭрши*
*пĕрчĕ – пĕрчĕм, пĕрчŭ, пĕрчи*
*хурçă – хурçăм, хурçу, хурçи*

**3.** ***-Ея, -ья, -ье*** сас паллисемпе пĕтекен япала ячĕсен камăнлăх формине çапла çырмалла:

1-мĕш сăпатра – *тухьям, статьям, идейăм, кĕсьем, çемьем;*
2-мĕш сăпатра – *тухью, статью, идею, кĕсйŭ, çемйŭ;*
3-мĕш сăпатра – *тухйи, статйи, идейи, кĕсйи, çемйи.*

### Хăш-пĕр падеж формисенчи япала ячĕсене çырасси

**1.** Çемçелĕх паллипе пĕтекен япала ячĕсен камăнлăх тата пару падежĕсенче ***ь*** тухса ӳкет, ытти падежсенче пуринче те çемçелĕх паллипе çырмалла:

*тетрадь – тетрадĕн, тетраде*
*кровать – кроватĕн, кровате*
*площадь – площадĕн, площаде*

**Анчах:** *тетрадьре, тетрадьрен, тетрадьпе, тетрадьсĕр, тетрадьшĕн; кроватьре, кроватьрен, кроватьпе, кроватьсĕр, кроватьшĕн.*

**2.** ***Л, ль, н, нь*** сасăсемпе пĕтекен хăш-пĕр япала ячĕсен вырăнпа туху падежĕсенче икĕ тĕрлĕ çырма юрать:

*район – районта – районра,*
*районтан – районран*
*вокзал – вокзалта – вокзалра,*
*вокзалтан – вокзалран*
*учитель – учительте – учительре,*
*учительтен – учительрен*

## Вырăс чĕлхинчен йышăннă япала ячĕсене çырасси

**1.** Ударенисĕр ***-ий, -ия, -ие*** сас паллисемпе пĕтекен япала ячĕсене пур формăра та юлашки ***й, я, е*** сас паллисемсĕр çырмалла: *постановлени, зоологи, пролетари, пособи, поэзи.*

**2.** ***-Ий, -ия*** сас паллисемпе пĕтекен çын ячĕсене тĕп падежра çавăн пекех çырмалла, ытти падежсенче – ***й, я*** сас паллисемсĕр: *Василий – Василин, Василие, Василирен; Ксения – Ксение, Ксенирен, Ксенипе.*

**3.** ***-Ая*** сас паллисемпе пĕтекен хушаматсене пур падеж формисенче те çавăн пекех хăвармалла: *Ивановская, Ивановскаян, Ивановскаяпа.*

**4.** ***-Ея*** сас паллисемпе пĕтекен япала ячĕсене тĕп падежра çавăн пекех, ытти падежсенче ***я*** вырăнне ***йă*** çырмалла: *идея – идейăн, идейăна, идейăпа, идейăсăр; батарея – батарейăн, батарейăра, батарейăпа.*

**5.** Ударенисĕр ***а, о, я, е*** сас паллисемпе пĕтекен япала ячĕсене тĕп падежра çавăн пекех, ытти падежсенче ***а, о, я, е*** вырăнне ***ă, ĕ*** сас паллисем çырмалла: *схема – схемăн, схемăна, схемăпа, схемăсăр; общество – обществăн, обществăна, обществăра, обществăсăр; кухня – кухньăн, кухньăна, кухньăра; училище – училищĕн, училищĕне, училищĕре, училищĕпе.*

**6.** ***-Ый, -ая, -ое, -ее*** сас паллисемпе пĕтекен япала ячĕсене çапла çырмалла:

а) ударениллĕ ***-ская, -ское, -ая, -ое*** вырăнне тĕп падежра ***-ой*** çырмалла: *мастерской, накладной, запятой;*

ă) ударенисĕр ***-ская, -ское*** вырăнне тĕп падежра ***-ски*** çырмалла: *парикмахерски, Красноармейски* (ял);

б) ударенисĕр ***-ый, -ая, -ое*** вырăнне япала ячĕн пур падеж формисенче те ***-ăй*** çырмалла: *столовăй, сказуемăй, булочнăй, дежурнăй, вожатăй.*

**7.** ***-Сть, -сь, -зь*** сас паллисемпе пĕтекен япала ячĕсене тĕп падежра çавăн пекех хăвармалла, ытти падежсенче ***-сть, -сь,***

*-зь* вырӑнне *ç* çырмалла: *промышленность – промышленноçӑн, промышленноçа, промышленноçпа; перепись – перепиçӗн, перепиçе, перепиçре; князь – княçӑн, княçа, княçпа.*

**8.** Вырӑс чӗлхинчен çыру урлӑ йышӑннӑ хӑш-пӗр сӑмахсен вӗçӗнче тӗп падежра икӗ пӗр пек хупӑ сас палли çыраççӗ. Ытти падеж формисенче пӗр хупӑ сас палли çеç çырмалла:

| Тӗп падежра | Ытти падежсенче |
|---|---|
| *класс* | *класӑн, класа, класра* |
| *металл* | *металӑн, метала, металра* |
| *грипп* | *грипӑн, грипа, грипра* |
| *процесс* | *процесӑн, процеса, процесра* |
| *кросс* | *кросӑн, кроса, кросра* |
| *грамм* | *грамӑн, грама, грамра* |
| *Филипп* | *Филипӑн, Филипа, Филипра* |
| *финн* | *финӑн, фина, финра* |

## Вӑйлӑ степеньри паллӑ ячӗсене çырасси

**1.** Малтанхи пайне паллӑ ячӗ умне лартнӑ чух – дефиспа уйӑрса: *сап-сарӑ, шап-шурӑ, кӑн-кӑвак, çап-çутӑ.*

**2.** Паллӑ ятне икӗ хут каланӑ чух – дефиспа уйӑрса: *пысӑк-пысӑк, хӗрлӗ-хӗрлӗ, сарӑ-сарӑ.*

## Хисеп ячӗсене çырасси

**1.** Икӗ хут калакан тата мӑшӑр хисеп ячӗсен пайӗсене дефис урлӑ çыраççӗ: *çӗр-çӗр, пин-пин, ик-виç, çич-сакӑр, вӑтӑр-вӑтӑр пилӗк.*

**2.** Йӗрке хисеп ячӗсене яланах *-мӗш* аффикспа çырмалла: *иккӗмӗш, тӑваттӑмӗш, вуннӑмӗш, вӑтӑрмӗш.*

## Глаголсене çырасси

### *Хальхи вӑхӑт*

**1.** Глагол тӗпӗ хытӑ пулсан пӗрреллӗ хисепри 3-мӗш сӑпатра *т* хыççӑн çемçелӗх палли **(ь)** çырмалла: *çырать, ларать, тухать.*

**2.** Нумайлӑ хисепӗн 2-мӗш сӑпатӗнче пӗр *т* çырмалла: *çыратӑр, ларатӑр, тухатӑр.*

**3.** Нумайлӑ хисепӗн 3-мӗш сӑпатӗнче икӗ *ç* çырмалла: *çыраççӗ, лараççӗ, тухаççӗ.*

### *Пĕрре иртнĕ вăхăт*

***Р*** сасăпа пĕтекен тăхăр глагол тĕпĕ *(пар, пер, йĕр, кĕр, кӳр, пыр, тăр, хур, яр)* çумне вăхăт аффиксĕ хушăннă чухне çав сасă тухса ӳкет: *патăм, петĕм, йĕтĕм, кĕтĕм, кӳтĕм, пытăм, тăтăм, хутăм, ятăм.*

### *Темиçе иртнĕ вăхăт*

**1.** Глаголăн пурлă формин 1-мĕшпе 2-мĕш сăпачĕсенче икĕ ***т*** çырмалла: *çыраттăм, çыраттăн; лараттăм, лараттăн.*

Çуклă формăра пĕр ***т*** çеç çырмалла: *çырмастăм, çырмастăн.*

**2.** Глаголăн 3-мĕш сăпатĕнче яланах ***тч*** çырмалла: *çыратчĕ, ларатчĕ, тухатчĕ.*

**3.** Темиçе иртнĕ вăхăтăн 1-мĕшпе 2-мĕш сăпачĕсен формисем çумне хушăннă ***-ччĕ*** аффиксра яланах икĕ ***ч*** çырмалла: *çыраттăмччĕ, çыраттăнччĕ, çырмастăмччĕ, çырмастăнччĕ.*

### *Хушу наклоненийĕ*

**1.** Глаголăн нумайлă хисепĕнчи 3-мĕш сăпатĕнче хытă сăмахсенче аффиксăн ***-чăр,*** çемçе сăмахсенче ***-чĕр*** вариантне çырмалла: *касчăр, тытчăр, типчĕр, пиçчĕр.*

**2.** Глагол тĕпĕ уçă сасăпа е янăравлă хупă сасăпа пĕтет пулсан аффиксра икĕ ***ч*** çырмалла: *çырччăр, пĕлччĕр, кайччăр, çиччĕр, вулаччăр, туччăр.*

### *Ĕмĕт наклоненийĕ*

Ĕмĕт наклоненийĕн 1-мĕшпе 2-мĕш сăпачĕсенче икĕ ***т,*** 3-мĕш сăпатĕнче икĕ ***ч*** çырмалла: *çырăттăм, çырăттăн, çырĕччĕ; вулăттăм, вулăттăн, вулĕччĕ.*

### **Причастисене çырасси**

**1.** Пулас причастин камăнлăх формисенче причасти аффиксĕсенче икĕ ***с*** çырмалла: *çырассăм, çырассу, çырассăмăр, çырассăр, çырасси.*

**2.** Пулмалли причасти аффиксĕнче икĕ ***л*** çырмалла: *çырмалла, вуламалла.*

**3.** Хальхи, пулас тата пулмалли причастисен ***-и*** аффикслă палăрту форминче икĕ ***н, с, л*** çырмалла: *çыраканни, çырасси, çырмалли.*

**4.** Пулас причастин ***-скер*** аффикслă палăрту форминче икĕ ***с*** çырмалла: *çырасскер, вуласскер, вĕренесскер.*

### Деепричастисене çырасси

**1.** Икĕ хут калакан деепричастисене дефис урлă çырмалла: *çыра-çыра, вула-вула.*

**2.** Деепричастисен ***-сассăн(-сессĕн), -массерен(-мессерен)*** аффиксĕсенче икĕ ***с*** çырмалла.

**3.** ***-иччен*** аффикслă деепричастисенче икĕ ***ч*** çырмалла: *çыриччен, вуличчен, кайиччен.*

### Наречисене çырасси

Мăшăр тата икĕ хут калакан наречисен пайĕсене дефис урлă çырмалла: *унта-кунта, аран-аран, апла-капла, паян-ĕнер, харăс-харăс.*

### Евĕрлев сăмахĕсене çырасси

Евĕрлев сăмахĕсенчи сасă вăрăммăн илтĕннине палăртма икĕ-виçĕ пĕр пек сас палли çырмалла. Ун пек чухне пĕр пек сас паллисем хушшине дефис çырмалла: *ши-и-и, шан-н, шатăр-р-р, ту-у-у.*

### Татăксене çырасси

***-ха, -çке, -и, -ши, -им, -шим, -мĕн, -тăр(-тĕр)*** татăксене дефиспа çыраççĕ: *кай-ха, кил-ха, килчĕ-и, кайрĕ-ши, аван-мĕн, илемлĕ-çке, килчĕ-тĕр.*

### Междометисене çырасси

Темиçе хут калакан е сасса вăрăммăн тăсса калакан междометисене дефиспа çырмалла: *ай-ай, ай-яй, ай-вай, и-и-и, фу-у, ы-ы-ых, тр-р-р, тс-с-с.*

## СИНТАКСИС

| | |
|---|---|
| **Синтаксис** – чĕлхе наукин пуплев епле йĕркеленни çинчен вĕрентекен пайĕ. | **Морфологи** – чĕлхе наукин сăмах пулăвĕпе тытăмĕ тата сăмахăн уйрăмлăхĕсем çинчен вĕрентекен пайĕ. |

Морфологипе синтаксис пĕрлешĕвне **грамматика** теççĕ.

### Синтаксис единицисем

| | |
|---|---|
| **Сăмах майлашăвĕ** – пĕр ăнлавпа çыхăннă хăй пĕлтерĕшлĕ икĕ е темиçе сăмах пĕрлешĕвĕ: *çенĕк алăкĕ, пахчара çӳре, чăрăш турачĕн хунавĕсем.* | **Предложени** – вĕçленнĕ уйрăм шухăша палăртакан пĕр сăмах е сăмахсен пĕрлешĕвĕ: *Чăрăш турачĕн хунавĕсем шурă юр çинче выртаççĕ.* (Г.Еф.) |

## Сӑмах майлашӑвӗн тытӑмӗ

| | |
|---|---|
| **Ансӑр сӑмах майлашӑвӗ** – хӑй пӗлтерӗшлӗ икӗ сӑмах пӗрлешӗвӗ: *ҫӑмламас упа, шурӑ юр, вӑрмана кӗр, хаҫат валли ҫыр.* | **Анлӑ сӑмах майлашӑвӗ** – хӑй пӗлтерӗшлӗ виҫӗ е ытларах сӑмах пӗрлешӗвӗ: *ҫӑмламас хӑмӑр упа, кӑпӑшка шурӑ юр, ҫурхи вӑрмана кӗр, пирӗн хаҫат валли ҫыр.* |

## Хутсӑр предложенисене каланин тӗллевне кура ушкӑнлани

| Ушкӑнсем | Пӗлтерӗшӗ | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| 1. Ыйтуллӑ | Мӗн ҫинчен те пулин ыйтнине пӗлтерӗҫҫӗ. | *Эсир чӑваш халӑхӗн паянхи ӗҫ-хӗл, ӑс-хакӑл, культура шайне мӗнле хакланӑ пулӑттӑр?* |
| 2. Калуллӑ | Мӗн ҫинчен те пулин каласа параҫҫӗ. | *Тин кӑна вӑраннӑ хӗвел ҫӗр питне ӑшшӑн ҫупӑрларӗ.* (М.Андр.) |
| 3. Хистевлӗ | Мӗн те пулин тума хистеҫҫӗ, хушаҫҫӗ, ыйтаҫҫӗ. | *Илсе ҫӳре-ха пире, хаклӑ Кирилл Константинович, тепӗр хут авалхи Греци ҫӗршывӗ тӑрӑх, Египет фараонӗсем ҫинчен каласа кӑтарт.* (П.Аф.) |
| 4. Ӗмӗт, сунӑм пӗлтерӗшлӗ | Мӗн те пулин тума кӑмӑл-туйӑм пуррине пӗлтерӗҫҫӗ. | *Эс килессе пӗлсессӗн хапха умне тухӑттӑм, пирӗн тӗле ҫитсессӗн хирӗҫ утса пырӑттӑм.* (Т.Вер.) |

## Предложенин тӗп членӗсем

| | |
|---|---|
| **Подлежащи** – предложенири ытти сӑмахсене пӑхӑнман *кам? мӗн? камсем? мӗнсем?* ыйтусенче тӑракан тӗп член. *Чи ҫӳллӗ тусен тӑррине ҫил йӑва ҫавӑрнӑ, ӗмӗрсем хушши унта пурӑнса чулсене якатса янӑ, шӑтарса кӗнӗ.* (Ю.Скв.) | **Сказуемӑй** – подлежащи ӗҫне е пӗр-пӗр паллине кӑтартса *мӗн тӑвать? мӗн вӑл? кам вӑл? вӑл мӗнле?* йышши ыйтусенче тӑракан тӗп член. *Сайра хутра ҫеҫ пӗлӗт ӑшӗнчен юмахри хуп-хура хӗвел пек ту тӑрри кӑшт пӑхса илет те каллех ҫухалать.* (Ю.Скв.) |

## Подлежащи пулăвĕ

| Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Япала ячĕ | *Хура* ***аист*** *– вăрманта вăрттăн пурăнакан чарлан пек кайăк.* (Н.Сл.) |
| 2. Местоимени | *Çак кунран пуçласа* ***эпĕ*** *пĕр тĕпрен ÿсекен икĕ шурă хурăна яланах тимлесе сăнама тытăнтăм.* (Г.Еф.) |
| 3. Паллă ячĕ | *Çăкăртан* ***асли*** *те çук, Çăкăртан* ***хакли*** *те çук.* (В.Пр.) |
| 4. Хисеп ячĕ | *Тĕркĕшнĕ май утă лавĕ çинчен* ***иккĕшĕ*** *те шуса анчĕç.* (В.Ал.) |
| 5. Глаголăн сăпатсăр формисем (причасти, инфинитив) | ***Тăрăшни*** *нихăçан та сая каймасть çав.* (В.Ал.) ***Касма*** *çăмăл,* ***ÿстерме*** *йывăр.* ***Илесси*** *çăмăл,* ***парасси*** *йывăр.* (Ват. сăм.) |
| 6. Сăмахсен пĕрлешĕвĕ | *Унтан* ***Кавруşпа Карачăм иккĕшĕ*** *те йывăç тураттисем çине улăхса утлана-утлана ларчĕç.* (Д.Чалт.) |

## Сказуемăй пулăвĕ

| Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Сăпатлă формăри глагол | *Çерем çинче пĕр хура курак ушкăн шăнкăрч хушшинче уткаласа* ***çÿрет.*** *Кисловодскпа сывпуллашнă май Зиновий юлашки хут турбаза кил картине* ***кĕчĕ.*** (Ю.Скв.) |
| 2. Сăпатсăр формăри глагол (причасти) | *Усала хирĕç ман ятпа çирĕппĕн* ***тăмалла.*** (Г.Еф.) *Пятигорск таврашĕнчи инçе курăнакан тÿрем тавралăхра саплăкăн-саплăкăн пĕлĕт мĕлкисем хытса* ***тăнă.*** (Ю.Скв.) |
| 3. Япала ячĕ | *Тăри – вĕçĕмсĕр кăвак инçете юрлакан* ***кайăк.*** (В.Ал.) *Ашшĕ вăрăм сăмсаллă шурă* ***карттуспа.*** (И.Ег.) |
| 4. Хисеп ячĕ | *Ăмăртура мала тухакансем –* ***виççĕмĕшсем.*** *Акă эсĕ* ***çирĕмре.*** (Ст.Лаш.) |
| 5. Евĕрлев сăмахĕ | *Кушак тяппи* ***тяп-тяп.*** (Ч.х.с.) *Çаран –* ***ян! та ян!*** (В.Энт.) |
| 6. Местоимени | *Паян класра дежурнăй* ***эсĕ.*** *Ку кĕнеке* ***манăн.*** |
| 7. Сăмахсен пĕрлешĕвĕ | *Манăн та пусăрăнчăк кăмăл* ***çĕкленме пуçларĕ.*** *Унпа çуммăн тăрса кăшт* ***çамрăкланса кайрăм-ши.*** (И.Егор.) *Çил* ***çукпа пĕрех.*** (В.Ал.) |

## Предложенин кĕçĕн членĕсем

| Кĕçĕн членсем | Паллисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Определени | Предложенире япала ятне ăнлантарать. | *Зинови ури айĕнче **вĕтĕ** чулсем юхса шăкăртатрĕç.* (Ю.Скв.) |
| Дополнени | Предложенири ĕçе е мĕнлелĕхе кăтартакан сăмаха ăнлантарать, падеж ыйтăвĕсенче тăрать. | *Çирĕклĕх **шывне** вăрăм çÿç пек усăнакан туратлă çирĕксем хупласах хунă.* (Ю.Скв.) |
| Обстоятельство | Предложенири ĕçе кăтартакан сăмаха ăнлантарать, ĕçĕн вăхăтне, мĕнлелĕхне, вырăнне, сăлтавне, тĕллевне т.ыт.те палăртать. | ***Урамра** чечек шăваракан хĕрсем çеç тулли лейкăсем йăтса **газонсем хушшипе** утаççĕ.* (Ю.Скв.) |

## Определени пулăвĕ

| Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Япала ячĕ | *Кайăк юрриллĕ вăрман **çынсен** савăнăçĕпе янăрать.* (Г.Еф.) |
| Паллă ячĕ | *Хурчка аçи йăвине **çÿллĕ** йывăç тăррине вырнаçтарать.* (Н.Игн.) |
| Хисеп ячĕ | *Петюкпа пĕрле **пĕр** тĕпрен ÿсекен **икĕ** хурăн патне кайса килтĕмĕр.* (Г.Еф.) |
| Местоимени | ***Хамăрăн** ачалăха аса илме каникулсенче хурăнсем патне кайса килеттĕмĕр.* (Г.Еф.)<br>***Леш** чăрăш йĕкелĕ вара ку таранччен **манăн** сĕтел çинче выртать.* (Н.Сл.) |
| Евĕрлев сăмахĕ | ***Пăлтăр** та **пăлтăр** пултăранăн*<br>*Папка та ярас вăхăчĕ.*<br>*Ан çилленĕр, ваттисем,*<br>*Выляс-кулас та вăхăчĕ.* (Хал. юр.) |
| Сăпатсăр формăри глагол (причасти) | ***Тытас** чĕр чуна асăрхасан хăлат çĕр çинелле урисене малалла тăсса чул пек ÿкет.* (Н.Игн.)<br>*Турат çинче **ларакан** кайăк çумран вĕçсе **иртекен** хурт-кăпшанка сывлăшра тытать.* (Н.Игн.) |

## Дополнени пулăвĕ

| Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Япала ячĕ | *Урама тухсанах сивĕ* ***пите*** *çулăм пек пĕçертсе илет.* (В.Ал.) |
| Паллă ячĕ | *Улăхра курсан чечек*<br>*Ешĕл çуркунне.*<br>*Ан васка эсĕ татма*<br>***Чи илемлине.*** |
| Хисеп ячĕ | *Илюк шкулта аван вĕреннĕ, уроксенче яланах* ***«тăваттă»*** *та* ***«пиллĕк»*** *илнĕ.* (Л.Аг.) |
| Местоимени | *Сĕве кукринче миçе пулăç ларать!* ***Кашнин*** *вăлта яма ятарласа тунă çур утрав пур.* (А.Кăл.)<br>*Кĕре хирĕç уйрăмах хĕрӳ вăхăт пуçланать* ***ун-шăн.*** (Ю.Сил.) |
| Глаголăн сăпатсăр форми (причасти) | *Уçланкă варринче —* ***çĕршĕннипе*** *чалăшнă вĕллесем вырнаçнă.* (В.Ен.) |

## Обстоятельство пулăвĕ

| Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Япала ячĕ | ***Тӳпере*** *тăрисем мĕн тери янăравлăн, мĕн тери хĕпĕртесе юрă шăрантараççĕ.* (В.Ал.) |
| Паллă ячĕ | *Униççе карчăк пӳрчĕн чӳрече кантăкĕ* ***шап-шурă*** *шăннă.* (В.Ал.) |
| Хисеп ячĕ | ***Сиччĕ*** *виç те* ***пĕрре*** *кас.* (Ват. сăм.)<br>*Анчах* ***тăххăрта*** *кил вара.* (В.Игн.) |
| Местоимени | ***Темшĕн*** *шăпах çак лĕпĕш канăç памасть ма-на.* (Н.Сл.) |
| Наречи | ***Кăçал*** *кĕрт тарăн çав.* (Т.Еф.) |
| Еверлев сăмахĕ | *Бухгалтер сĕтел умне хуллен утса пычĕ те* ***ярт*** *тăсăлса тăчĕ.* (В.Ал.)<br>*Ене кăна витинче* ***кăмăрт-кăмăрт*** *тута-рать!* (Г.Еф.) |
| Глаголăн сăпатсăр форми (деепричасти, инфинитив) | *Хĕллехи йăвинчен хĕвел çинче хĕртĕнме мăнтăркка пурăш* ***йăраланса*** *тухать.* (Н.Сл.)<br>*Лăпкă çанталăкра тӳперен çаврăнса анакан юр пĕрчисене* ***сăнама*** *ытла та лайăх.* (В.Ал.)<br>*Савăнăç вăл кулленхи ĕç-пуççем хушшипе* ***систермесĕр*** *килет. (Г.Еф.)* |

## Обстоятельство ушкăнĕсем

| Пĕлтерĕш ушкăнĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Мĕнлелĕх обстоятельстви | *Малти вар шырланĕнче карласа юхакан çурхи шыв сасси чӳречерен* ***шăппăн-шăппăн*** *илтĕнет.* (К.Чул.) |
| Вырăн обстоятельстви | *Хаяр, арăш-пирĕш çанталăкра эпĕ* ***наряда*** *уйрăмах кăмăллăн каяттăм.* (В.Ал.) |
| Вăхăт обстоятельстви | *Юпа уйăхĕнчи юр* ***çĕрле*** *е* ***ирхине*** *шӳсе çемçелнĕ çĕр питне тăрăшсах шурă пĕркенчĕкпе витет.* (М.Кип.) |
| Пирке обстоятельстви | *Çапла вăрман тăрăх аташса çӳресен-çӳресен* ***ывăннипе*** *канма лартăм.* (В.Ал.) |
| Виçе обстоятельстви | *Чӳк уйăхĕнчи юр вара* ***часах*** *ирĕлсе пĕтмест, хăш чух икĕ-виçĕ эрне хушши ура айĕнче кăчăртатса выртать.* (М.Кип.) |

## Хутсăр предложенисен ушкăнĕсем

| Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. **Икĕ тĕп членлă предложенисем** (тĕп членĕсем иккĕшĕ те пулаççĕ)<br>2. **Пĕр тĕп членлă предложенисем** (тĕп членсенчен пĕри çеç пулать) | *Шăнкăр-шăнкăр çăл куççен шĕлтĕртетĕвне тăнласа яштака* ***хурăнсем*** ухăна-ухăна ачаш шевлепе ***вылянă.*** (Н.Илп.)<br>*Паян тумалли ĕçе ырана* ***ан хăвар.*** (Ват.сăм.) |

## Пĕр тĕп членлă предложенисем

| Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Подлежащисĕр | ***Калаçасчĕ*** *ман çынпа пĕрре тăватпилĕк çул каяллахи пек – çак ăшăмри хăватсăр, чунтан.* (Ю.Скв.) |
| 2. Сказуемăйсăр | *Хурама çулçи пек çулçăллă, пысăк кĕрен сапакаллă* ***каштансем...*** (Ю.Скв.) |

## Подлежащисĕр предложенисем

| Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1 | 2 |
| 1. Предложенире подлежащи пулма пултарать, анчах шухăшĕ тăрăх ăна асăнни кирлĕ мар. | *Мухтавлă хĕре кĕмĕл медаль* ***памалла тунă.*** (А.Арт.) |

| 1 | 2 |
|---|---|
| 2. Шухăшĕпе пĕтĕмлетӳллĕ предложенисенче подлежащи кирлех мар. | *Ватă çерçие хывăхпа* ***улталаймăн.*** *Тытман упа тирне* ***ан сӳ.*** (Ват.сăм.) |
| 3. Предложенире подлежащи пачах пулма пултараймасть. | *Тем пекех* ***таврăнас килнĕ*** *унăн тăван çĕршывне.* (А.Арт.) *Ăна ĕçрен тухма* ***йывăр пулать...*** (П.Ал.) |
| 4. Предложенире подлежащи çукки калас шухăша мĕнлерех йĕркелениничен килет. | *Уйра* ***шăп.*** (Хв.Уяр.) *Пӳртре таса,* ***çутă.*** (Илп.) |
| 5. Çут çанталăк пулăмĕсене е çын хăйне мĕнле туйнине палăртакан предложенисенче подлежащи пулмасть. | ***Тĕттĕмленсе ларчĕ*** *ĕнтĕ.* (А.Арт.) *Каçпа Ухтивана* ***пĕçертсе пăрахрĕ.*** (Хв.Уяр.) |

## Сказуемăйсăр предложенисем

| Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Предложенире япала ятĕнчен пулнă подлежащипе ун ушкăнне кĕрекен сăмахсем çеç пулаççĕ. | *Ту çинче çеç пулакан янкăртан та янкăр, кăн-кăвак* ***тӳпе.*** *Кисловодскра çеç пулакан пĕр сулăм çилсĕр* ***сывлăш.*** (Ю.Скв.) |
| 2. Предложенире япала ятĕнчен пулнă подлежащипе ун ушкăнне кĕмен сăмахсем те пулаççĕ. | *Тавра курăм хĕрринче – капмар пĕлĕт пек купаланса тăракан ĕмĕр ирĕлми пăрлă* ***тусем.*** (Ю.Скв.) |

## Тулли мар предложенисем

| Предложенисен уйрăмлăхĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Тулли мар предложенири сиктерсе хăварнă сăмахсем текстран е калаçуран паллă. | *– Ку сирĕн мĕнле ял пулчĕ?*<br>*– Куракьел.*<br>*–* ***Унта*** *çитме миçе çухрăм пулать?*<br>*–* ***Виççĕ.*** (Хв.Уяр.) |
| 2. Хутлă предложенин пĕр пайĕ тулли мар пулма пултарать. | *Куç хитрине юратать,* ***тута – тутлине.*** (Ват.сăм.) |
| 3. Юнашар тăракан уйрăм хутсăр предложенисем шухăшĕпе тачă çыхăннă чух тулли мар пулма пултараççĕ. | *Акă пристань. Каччă чунне лăпланта-рас тесе пристане тухмарĕ.* ***Каютăрах куçне хупса ларчĕ.*** (М.Юх.) |
| 4. Хăш-пĕр тулли мар предложенисенче ĕçне тăваканни глагол сăпатĕнчен паллă пулнипе подлежащине каламасăр хăвараççĕ. | *Эх,* ***пыраттăмăр*** *вара çапса çăвакан çумăра хирĕç.* (В.Ал.); *Касса* ***илетĕн*** *те пĕр-пĕр якарах турата шаккаса шанкине ӳкеретĕн, пулас шăхлич вал-ли хуппинчен чĕлĕх* ***тăватăн.*** (А.Ем.) |

## ПĔР ЙЫШШИ ЧЛЕНСЕМ

| Предложени членĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Подлежащи | *Яштак* ***чиесем,*** *çĕмĕрт* ***йывăççисем,*** *çатрака туратлă* ***улмуççисем*** *шап-шурă тумпа витĕннĕ.* (Л.Агак.) |
| 2. Сказуемăй | ***Шавлать, кашлать*** *сĕм вăрман.* (К.Ив.) *Юратнă кĕтесĕм çамрăклăх* ***пиллерĕ,*** *ĕçе* ***хăнăхтарчĕ,*** *ĕçре* ***пиçĕхтерчĕ,*** *пурнăç сукмакĕ çине* ***кăларчĕ.*** (Ком. ял.) |
| 3. Определени | ***Чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх*** *йăранĕ ирĕкпе çĕнелнĕ пурăнăçран тарĕ.* (Çеçпĕл М.) |
| 4. Дополнени | ***Валем, купа, капансем*** *лартса тухрĕç сарлака улăх варрине. Пурăш ўсен-тăрансен* ***тымарне*** *те,* ***хурт-кăпшанка*** *та,* ***ăмана*** *та,* ***шăшие*** *те,* ***шапана*** *та* юратса çиет. (Хв.Уяр) |
| 5. Обстоятельство | *Хура аист сулхăнра кăна хура курăнать, хĕвел çинче* ***симĕссĕн, кăваккăн, йăм хĕрлĕн*** *йăлтăртатать.* (Н.Сл.) |

### Пĕр йышши членсен çыхăнăвĕ

| Союзсăр çыхăну | Союзлă çыхăну |
|---|---|
| Мĕн ĕлĕкрен пирĕн мăн асаттесем ўсен-тăрансен уссине ***пĕлсе тăнă,*** вĕсемпе тĕрлĕ чир-чĕртен ***сиплен-ме пĕлнĕ.*** (О.Еф.) | *Вăл* ***е*** *сăлтавсăрах ахăлтатса* ***кулса ярать, е*** тата кунĕ-кунĕпех пĕр чĕнмесĕр тарăн ***шухăша кайса ларать.*** (П.Аф.) |

### Пĕр йышши членсем союзсемпе çыхăнни

| Сыпăнуллă союзсем | | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 |
| Сыпăнтаракан | ***та(те)*** | *Шкул ачисем ирхи апат* ***çирĕç те*** *кĕнекесем илсе садри йăрăс тирексем айне* ***тухса ларчĕç.*** (Г.Еф.) |
| | ***тата*** | *Е.В.Владимиров – паллă* ***критик, тĕпчевçĕ, сăмах ăслăлăхĕсен тухтăрĕ тата педагог.*** (А.Меф.) |
| | ***ни*** | *Çак* ***ни вырăс, ни чăваш*** *хĕр ачин калаçăвĕ юлташсем хушшинче чыса та, мăнкăмăллăха та ўстеретчĕ.* (П.Аф.) |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| Хирĕçлекен | ***анчах*** | *Вăл хăлхине тăратса* ***итлет, анчах*** *калаçăва* ***хутшăнмасть.*** (Хв.Уяр.) |
| | ***çапах*** | *Юман темĕн те* ***тӳсет, çапах*** *çӳлеллех* ***ӳсет.*** (А.Арт.) |
| | ***унсăрăн*** | *Оленька яланах кама та пулин* ***юрататъ, унсăрăн пурăнма*** *та* ***пултараймасть.*** (А.Чех.) |
| | ***ахальлĕн*** | *Юрать-ха* ***тухрăм, ахальлĕн*** *сана та* ***курай-мастăм.*** (А.Лаз.) |
| Уйăракан | ***е-е*** | *Вăл кăнтăрла* ***сывăрать е*** *Атăл хĕрне* ***анать.*** *Çынсене курсан вăл* ***е пăрăнса утать, е*** *çĕрелле пăхса иртсе* ***каять.*** (Хв.Уяр.) |
| | ***пĕрре-тепре*** | *Хĕр Зинови умĕнче ĕçне пăрахсах пуç тутрине* ***пĕрре хытарса çыхнă*** *пек,* ***тепре пушатнă*** *пек куçаркаларĕ.* (Ю.Скв.) |
| | ***пĕр-пĕр*** | *Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă* ***пĕр кĕрет*** *те* ***пĕр тухать.*** (К.Ив.) |
| | ***те-те*** | ***Те кулать, те макăрать*** *вăл – уйăрса илеймерĕм.* (В.Петр.) |

## Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсем хушшине чарăну палли лартасси

| Чарăну паллисем | Лартассин уйрăмлăхĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. Запятой | Пĕр йышши членсем пĕр евĕр-лĕрех япаласене, пулăмсене, ĕç-хĕле сăнланă чух лар-таççĕ. | ***Упасем, пурăшсем, чĕрĕпсем*** *çур-куннеччен пĕр вăранмасăр шăтăкра* ***сывăраççĕ.*** (Н.Сл.) |
| 2. Тире | Пĕр йышши членсем пĕр-пĕрне хирĕçле пĕлтерĕш-лĕ чух лартаççĕ. | ***Мулкачсем, пăшисем, кашкăрсемпе çӳлевĕççем*** *юр вителĕк çинех* ***выртаççĕ – чирлемеççĕ.*** (Г.Орл.) |
| 3. Икĕ точ-ка | Пĕлтерĕшĕпе ыттисенчен анлăрах пĕр йышши член хыççăн лартаççĕ. | *Çав хушăра хуçа часрах мĕн тумал-лисене* ***тума васкать:*** *ăна-кăна* ***илсе кĕрет,*** *апат* ***лартса парать.*** (Хв.Уяр.) |
| 4. Точкăпа запятой | Анлă пĕр йышши членсем хушшине лартаççĕ. | *Вăл аялалла* ***чăмрĕ*** *те самантрах çӳлелле çĕкленсе инçех мар ӳсекен хыр турачĕсен хушшинче* ***çухалчĕ;*** *унтан тепĕр йĕкел йăтса тухса каллех хăйĕн кивĕ вырăнне, тăрри хуралнă хыр çине,* ***таврăнчĕ.*** (Г.Орл.) |

**Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем** — пĕлтерĕшĕ енчен пĕр йышши членсене пĕтĕмлетекен сăмахсем.

## Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси

| Пĕтĕмлетӳ сăмахĕн вырăнĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Пĕр йышши членсем умĕнче чухне пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем хыççăн **икĕ точка** лартаççĕ. | *Мĕн пур тавралăх вуншар тĕслĕ катрамран тăрать тейĕн: ешĕл калча, йăмăх хура çул, сарă-хĕрлĕ çулçăсем, тĕк пек шурă çăмăл пĕлĕтсем...* (П.Аф.) |
| 2. Пĕр йышши членсем хыçĕнче чухне пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем умĕн **тире** лартаççĕ. | *Вĕсем хушшинче тăхран, сар пăрчкан, кĕпшĕл, сăнчас, шĕлин курăс, пуса та майра кайăкĕсем –* ***йăлтах*** *пур пулас.* (Ю.Скв.) |
| 3. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем пĕр йышши членсем умĕн тăнă чух предложени вĕçленмест пулсан умĕн **икĕ точка,** хыççăн **тире** лартаççĕ. | *Хĕлле пур* ***йывăç та****: юман та, çăка та, хурăн та –* ***пурте*** *шапшурă юр айĕнче.* (Н.Сл.) |

## Предложенири уйрăмлатнă сăмахсем

| Уйрăмлатнин сăлтавĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Интонаципе уйрăмлатни предложенири сăмахсен çыхăнăвне тĕрĕс палăртма май парать. | *Пуçсем тăрринче,* ***тĕнче пĕтнĕ пек,*** *çил кĕрлет-ахăрать, алă тăратсан алла касса каяссăн туйăнать.* (Хв.Уяр.) |
| 2. Интонаципе уйрăмлатакан сăмахсем хăйсем умĕнчи сăмахсен пĕлтерĕшне уçса параççĕ, тĕрĕслетсе кăтартаççĕ. | *Вăл утланнă лашана тӳнтер кĕрĕк тăхăнса хăратнă ача,* ***Ваçук тусĕ,*** *ун патне халь ура ярса та пусман.* (Хв.Уяр.) |
| 3. Интонаципе уйрăмлатни çеç пĕр сăмаха теприпе çыхăнма май парать. | *Пĕр çын кăна –* ***кукамай*** *– хăйĕн пурнăç тĕрĕслĕхĕпе, йывăр шăпипе ман кăмăл-туйăма, ăс-пуçа нумай пуянлатрĕ.* (В.Петр.) |

## Уйрӑмлатнӑ сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗ

| Предложенин хӑш членӗпе ҫыхӑнать | Тӗслӗхсем |
|---|---|
| 1. Подлежащипе (е унӑн ушкӑнӗпе) | ***Микка, пӗрмаях чир-чӗрпе асапланаканскер,*** *пит имшеркке ӳсет.* (Ст.Асл.) |
| 2. Сказуемӑйпа (е унӑн ушкӑнӗпе) | *Лида кӗнекесем, тетрадьсем хурса тултарнӑ сӗтел умӗнче тӑрать —* ***хура вӑрӑм платйӗпе, кӑвак тутӑрпа.*** (А.Арт.) |
| 3. Дополненипе (е унӑн ушкӑнӗпе) | *Ҫав ҫӑкӑр-тӑварпа сӗтел хушши* ***пире, ватӑсене,*** *яланах хапӑл пултӑр.* (Г.Еф.) |
| 4. Обстоятельствӑпа (е унӑн ушкӑнӗпе) | ***Ту сӗвеклӗхӗнче, йӑмрапа хурӑнсен сулхӑнӗнче,*** *чӗркӗмӗл пек шӑнкӑртатса юхать шурӑ чул айӗнчен тапса тӑракан ҫӑл шывӗ.* (Г.Еф.) |

## Уйрӑмлатнӑ членсене чарӑну паллисемпе уйӑрасси

| Чарӑну палли лартасси | Тӗслӗхсем |
|---|---|
| 1. Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой е тире лартса уйӑраҫҫӗ. | *Чикӗ леш енчи мул хуҫисен тарҫисем –* ***наркӑмӑш чӗлхеллӗ сутӑнчӑк ҫыравҫӑсем*** *– пиртен куҫӑнах мӑшкӑллатчӗҫ.* (А.Эсх.) *Ухтиван килтен тухса кайнӑ ҫулхи кӗркунне,* ***пӗр тӗттӗм каҫхине,*** *Яриле старик уй варрипе ялалла юрттарса пынӑ.* (Хв.Уяр.) |
| 2. Хӑш чухне шухӑш уҫӑмлӑхӗшӗн предложенин пӗр-пӗр сыпӑкне умӗнхи сӑмахсенчен уйрӑмлатса каланӑ чух ҫав сыпӑк умне тире лартаҫҫӗ, хыҫҫӑн нимӗн те лартмаҫҫӗ. | *Чирлӗ Хветуҫ хӑйӗн ывӑлӗсем –* ***хӑйӗн телейӗ*** *ҫине пӑхса пӗр-икӗ хутчен вӑйсӑррӑн кулса илчӗ.* (Л.Агак.) |
| 3. Тепӗр чух предложенин сыпӑкӗсене интонаципе уйрӑмлатса та, уйрӑмлатмасӑр та калама юрать. Унашкал сыпӑксене чарӑну паллипе уйӑрсан та, уйӑрмасан та юрать. | *Вӑрман урлӑ каҫнӑ чух Ҫемене хӑйсен кӳршӗ хӗрарӑмӗ,* ***Варук инке,*** *пушӑ лавпа хуса ҫитрӗ.* (А.Арт.) |

## Кӳртӗм сӑмахсемпе предложенисем

Калаканӗ хӑйӗн шухӑшне мӗнле хакланине (ҫирӗплетнине, иккӗленнине, кӑмӑлланине т.ыт.те.) палӑртакан сӑмахсене **кӳртӗм сӑмахсем** теҫҫӗ.

## Кӳртĕм сăмахсен пĕлтерĕшĕсем

| Пĕлтерĕшĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Калаканни хăй шухăшĕ çине епле пăхни (çирĕплетни, иккĕленни, кăмăллани т.ыт.те) | ***Тен,*** *вăл аслисенчен те ытла ĕçлет пуль.* (Хв.Уяр.) ***Шел,*** *сурăхĕ лайăхчĕ: улаччĕ, йăвашчĕ, кĕтӳрен таврăннă-таврăнман Палюк аллине пырса шăршлатчĕ.* (Хв.Уяр.) |
| 2. Шухăша пĕтĕмлетнине палăртни | ***Тӳррипе каласан,*** *аслă тухтăрне те мĕн те пулин памаллаччĕ ĕнтĕ.* (Хв.Уяр.) |
| 3. Шухăш йĕркине палăртни | *Валентин паян калама çук телейлĕ, мĕншĕн тесен,* ***пĕрремĕшĕнчен,*** *вăл халĕ çак ирĕклĕ çĕр çинче,* ***иккĕмĕшĕнчен,*** *хăйĕн юратнă ĕçне тума пултарать.* (А.Арт.) |
| 4. Сăмах е шухăш камран тухнине палăртни | ***Эп ас тăваССа,*** *Шупашкар урамĕнче пĕр харăс икĕ-виçĕ сынран ытла çӳреместчĕ...* (Хв.Уяр.) |

## Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисене чарăну паллисемпе уйăрасси

| Чарăну палли лартасси | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Сказуемăй умĕн тăнă чух кӳртĕм сăмахсене запятойпа уйăраççĕ. | ***Чăн та,*** *иксĕмĕр те çамрăк, пурнăç тĕпелне иртсе курман, ун кĕрекине ларса курман-ха.* (А.Арт.) |
| 2. Сказуемăй хыççăн унпа юнашар тăнă чух кӳртĕм сăмахсене запятойпа уйăрмаççĕ. | *Самоходка çурт умнех килсе чарăннă* ***иккен.*** (А.Арт.) |
| 3. Кӳртĕм предложенисене икĕ енчен те запятой е тире лартса уйăраççĕ е скобка ăшне хупаççĕ. | *Васука хăнана чĕнмесен те* ***(хăнасем тăрăх çӳреме çамрăк-ха вăл)*** *пĕри те тепри кĕрсе тухма йыхăраççĕ.* (Хв.Уяр.) |
| 4. Кӳртĕм сăмахсем предложенин пĕр-пĕр кĕçĕн членĕпе çыхăннă чух вĕсене çав кĕçĕн членĕпе пĕрле предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ. | ***Укол тунă хыççăн пулас,*** *аманнă çын вăраммăн сывласа ячĕ.* (Л.Аг.) |
| 5. Кӳртĕм предложение уйрăм предложени пек йĕркеленĕ чух ăна скобкăна хупаççĕ, чарăну паллине скобка ăшнех лартаççĕ. | *Такам ăна пусĕнчен çатлаттарнă.* ***(Тен, пан улмийĕ улмуççи тăрринчен çапла ӳкнĕ.)*** (Хв.Уяр.) |
| 6. Кӳртĕм сăмахсем предложени шухăшĕпе пĕтĕмĕшлĕн çыхăннине кăтартма сказуемăй хыççăн унпа юнашар тăнă чух та вĕсене запятойпа уйăраççĕ. | *Урхи мучи, пар-ха хăвăнне,* ***сан хăватлă пулаканччĕ,*** *пĕрер туртса ярар-ха,* ***эппин.*** (А.Арт.) |

# ЧĔНӲ

**Чĕнӳ** – кама е мĕне чĕнсе каланине пĕлтерекен сăмах. Вăл нимĕнле члена та пăхăнмасть, нимĕнле ыйтура та тăмасть. Тытăмĕ енчен ансăр тата анлă пулать.

| Ансăр | Анлă |
|---|---|
| *Эсĕ, **мăнукăм,** çынсем патне кай та вĕсене телей мĕнле тупмаллине, сивве яланлăхах мĕнле çĕнмеллине каласа кăтарт.* (Юхма М.) | ***Пĕчĕк ывăлăм Ванюш,** куншăнах пуçна ан ус.* (Л.Сар.); ***Асамат кĕперĕ,** савăнтар пире.* (И.Чер.) |

## Чĕнӳ пулăвĕ

| Мĕнле сăмахсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Çынна пĕлтерекен сăмахсенчен | *Ан кулян, **анне,** ан пăшăрхан, – терĕ Олег хуллен. – Хам тĕрĕс мар тунине йăлтах ăнлантăм.* (А.Лаз.) *Çавах та мĕн пĕлес килет сирĕн, **тăванăм,** мĕншĕн канăçа çухатнă?* (Г.Еф.) |
| 2. Тĕрлĕ япаласемпе пулăмсене палăртакан сăмахсенчен | ***Ырлăх!** Мĕн тери тăнăç та тарават **тӳпе!** Пăхса тăранайми **инçет! Шăплăх** та **лăпкăлăх! Виçесĕрлĕх!*** (Х.Алев.) ***Çумăр!** çу эс хытăрах, çитĕнесчĕ хăвăртрах.* (И.Чер.) |
| 3. Çын ячĕсенчен | *Ватăлтăм эпĕ, **Андрей Васильевич,** сасартăках ватăлса лартăм. Вун çиччĕре те мар пек туятăп хама каскас.* (Х.Аш.) *Çул çинче хăрушă мар-и, **Ухатер пичи?*** (Хв.Уяр.) |

## Чĕнĕвĕн предложенири вырăнĕ

| Предложени пуçламăшĕнче | Предложени варринче | Предложени вĕçĕнче |
|---|---|---|
| ***Кĕçени,** мĕн калаçатăн эсĕ, лăплан-ха, тархасшăн.* (Х.Аг.) ***Сĕм вăрман,** сан ырлăхна ытарма çук! Тав сана.* (Г.Еф.) | *Пăрăн, **чиперкке,** алăк çумĕнчен, пур пĕрех эсĕ тăвас тенĕ пек пулмасть...* (А.Арт.) *Тух, **савни,** чечек парнелĕп, чечекпе пĕрле чуна.* (А. Лук.) | *Асту, йывăçсем нумайрах лартма тăрăш, **тусăм.*** (В.Ал.) *Мухтав сана, **тертлĕ Хура çăкăр!** Мухтав сана, **тырă ăсти!*** (А.Вороб.) |

## Чĕнӳ сăмахĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси

| Чĕнĕвĕн вырăнĕ | Чарăну палли лартасси | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. Предложени пуçламăшĕнче | Чĕнӳ хыççăн запятой лартаççĕ. Хумханullă кăмăлпа калакан чĕнӳ хыççăн кăшкăру палли лартаççĕ, малалли сăмаха пысăк сас паллипе çыраççĕ. | ***Ывăлăм,*** *çĕнĕ çурт умне эпир пилеш лартăпăр.* ***Юратнă асатте!*** *Ку çырăва эпĕ сан пата ятарласа çыратăп.* (Г.Еф.) |
| 2. Предложени варринче | Чĕнĕве икĕ енчен запятой лартса уйăраççĕ. | *Ăслă каларăн,* ***хĕрĕм,*** *хисеп турăн аçуна.* (К.Ив.) |
| 3. Предложени вĕçĕнче | Чĕнӳ умĕн запятой лартаççĕ. | *Сыв пул эппин,* ***аппаçăм!*** (К.Ив.) |

# ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИ

## Хутлă предложени тĕсĕсем

| Предложени тĕсĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. **Союзсăр хутлă предложени** – интонаципе çыхăнакан хутсăр предложенисен пĕрлĕхĕ. | *Пĕрисем купăспа ушкăнăн-ушкăнăн иртсе каяççĕ, теприсем пĕр вырăна пухăнса тăнă та такмакласа ташша илтереççĕ.* (Г.Еф.) |
| 2. **Сыпăнуллă хутлă предложени** – сыпăнуллă союзсемпе çыхăнакан хутсăр предложенисен пĕрлĕхĕ. | *Сана эпĕ хамăн мĕн пур шалу укçине парса тăрăп,* ***анчах*** *эсĕ мана каялла илсе ан кай.* (С.Элк.) *Вăл уйрăм ларакан ăвăс айне тарса кĕме хăтланчĕ* ***те,*** *сывлăш хумĕ пачах урăх еннелле сулăнтарса ячĕ.* (Д.Горд.) |
| 3. **Пăхăнуллă хутлă предложени** – пăхăнуллă союзсемпе, союзла сăмахсемпе, хыççăмахсемпе, аффикссемпе, вырăнĕ-йĕркипе çыхăнакан хутсăр предложенисен пĕрлĕхĕ. | *Çăварне тутăр вĕçĕпе хупланă* ***пулин те*** *усĕрнĕ сасă чылаях аякра илтĕннĕ.* (Л.Аг.) *Йăван таврăннă* ***чух*** *унăн пӳртĕнче кӳршĕ çамрăкĕ Павăл тата Муççа ывăлĕ Ванеç «Хыпар» хаçат вуласа ларатчĕç.* (С.Элк.) |

## Сыпăнуллă хутлă предложенисем

| Предложенисен тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. **Сыпăнтаракан** союзлă сыпăнуллă хутлă предложени | *Эпир кашниех ăна тав тăватпăр* ***та,*** *пурте пĕрле пӳрте кĕпĕрленсе кĕретпĕр.* (А.Талв.) |
| 2. **Хирĕçлекен** союзлă сыпăнуллă хутлă предложени | *Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ,* ***анчах*** *Василий Квасов аллине нимĕнле пысăк ĕç те лекмен-ха.* (П.Аф.) |
| 3. **Уйăракан** союзлă сыпăнуллă хутлă предложени | ***Те*** *такам кăларса илнĕ ăна,* ***те*** *паçăр урампа хытă чупнă чух кăларса ӳкерсе хăварнă.* (Л.Аг.) |

## Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем

| Союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| ***та(те)*** | *Тепĕр чух васкавлă ĕçсем пулатчĕç* ***те,*** *вуншар-вун икшер сехет те тăраттăм машина патĕнче.* (Л.Аг.) |
| **тата** | *Çăлтăрсем йăлтăртатаççĕ,* ***тата*** *çĕн уйăх çурла пек курăнса тăрать.* (Л.Аг.) |

## Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем

| Союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| ***анчах*** | *Вăл чăвашла аван калаçать,* ***анчах*** *унăн çемçен тухакан сăмахĕсенче вырăс чĕлхи акценчĕ палăрать.* (С.Элк.) |
| ***çапах*** | *Витнĕ йĕтем çинче паçăрах тĕттĕмленчĕ,* ***çапах*** *сынсем хунар çутипе те пулин авăн çапаççĕ.* (А.Арт.) |
| ***унсăрăн*** | *Пур çĕре те хамăн çитмелле,* ***унсăрăн*** *йĕрке пулмасть.* (А.Арт.) |

## Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем

| Союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| ***те-те*** | ***Те*** *сывлăм вăйлă ӳкнĕ,* ***те*** *çумăр çуса кайнă.* (Л.Аг.) |
| ***е-е*** | ***Е*** *шартлама сивĕ тăрать,* ***е*** *тапхăр-тапхăр тăман кутăн-пуçăн çаврăнать.* (Г.Орл.) |
| ***пĕрре-тепре*** | *Левенĕн шурă вăрăм пӳрнисем клавишсем тăрăх* ***пĕрре*** *питĕ хăвăрт вĕлтĕртетсе чупаççĕ,* ***тепре*** *вăл вăраххăн, меллĕн темиçе аккорд илсе харăс-харăс пусать.* (А.Арт.) |
| ***ни-ни*** | *Кĕнекен пĕр хĕррине çеç тĕксе пăхнипе Хветутăн* ***ни*** *ăшĕ канмасть,* ***ни*** *кĕнекин вăрттăнлăхне пĕлмест вăл.* (Хв.Уяр.) |

## Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшинчи шухăш çыхăнăвĕсем

| Çыхăну тĕсĕсем тата вĕсене палăртакан союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Хутсăр предложенисем умлăн-хыçлăн е пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕçсемпе пулăмсене сăнлани ***(та(те), тата).*** | *Пирĕн палатăран пĕри килне тухса кайрĕ* ***те,*** *ун вырăнне çав кунах çĕнĕ çынна килсе ячĕç.* (А.Талв.) |
| Хутсăр предложенисем хирĕçлев пĕлтерĕшне (хăш-пĕр чух мĕнле те пулин хушма сĕме) палăртни ***(анчах, çапах, ахальлĕн, атту, унсăрăн).*** | *Кăмăлласа кулни мана кăштах лăплантарчĕ,* ***çапах*** *эпĕ çав кулла хăнăхса çитеймерĕм-ха.* (А.Арт.) |
| Пĕр хутсăр предложенири ĕç е пулăм тепĕр предложенири ĕçĕн результачĕ пулнине кăтартни ***(та(те).*** | *Анчах эпĕ пĕр хыпарсăр çухалтăм* ***та*** *– вăл сан çураçнă хĕрӳ пулса тăчĕ.* (А.Арт.) |
| Хутсăр предложенисем икĕ е темиçе ĕçрен пĕри пурнăçланмаллине, çав ĕçсенчен пĕрин çинче чарăнмаллине кăтартни ***(е-е, те-те).*** | ***Те*** *çыннисем пахчисене çырма хĕрринелле тăснă,* ***те*** *çырми пахча картисем çумне сĕвеннĕ.* (В.Элпи.) |
| Хутсăр предложенисем умлăн-хыçлăн улшăнса пыракан ĕçсене палăртни ***(пĕрре-тепре).*** | ***Пĕрре*** *чухăнсем çĕнтерсе пыма тытăнаççĕ пек –* ***тепре*** *пуянсем усалтарах кăшкăраççĕ.* (Юхма М.) |

## Сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси

| Чарăну паллисем | Чарăну палли лартмалли условисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Запятой | Хутсăр предложенисем пĕр вăхăтра е умлăн-хыçлăн пулса иртекен ĕçсене сăнлаççĕ. | *Тӳпе маччи ерипен хĕрелсе-хĕрелсе пычĕ* ***те,*** *вăрман тăррисене вут хыпса илчĕ.* (Г.Еф.) |
| Тире | Хутсăр предложенисем хирĕçле пĕлтерĕшлĕ пулсан. | *Тăшман салтакĕсем тепĕр хут çĕкленме тăчĕç* ***те*** *– çав вăхăтра сылтăм енче совет танкĕсем курăнса кайрĕç.* (А.Арт.) |
| | Хутсăр предложенисенчи ĕçсем хăвăрт е кĕтмен çĕртен пулнине палăртаççĕ. | *Юсаса е туса хăварнă хыççăн кăмакана хутса пăхаççĕ* ***те*** *– тĕтĕмĕ мăрьерен мар, кăмака çăварĕнчен тухать е арçури пек шăхăрать.* (Г.Еф.) |
| | Хыççăнхи хутсăр предложенири ĕç умĕн тăраканнин результачĕ е следствийĕ пулнине кăтартать. | *Пичĕ тăсăкларах* ***та*** *– сăмси те, çамки те, янахĕ те пĕчĕк тутипе виçеллĕ, килĕшӳллĕ.* (Ю.Скв.) |

## Союзсăр хутлă предложенисене тытăмĕ енчен ушкăнлани

| Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Пĕрешкел тытăмлă хутсăр предложенисенчен тăраççĕ.<br>Расна тытăмлă хутсăр предложенисенчен тăраççĕ. | *Ял çумĕпе çап-çутă Çарăмсан юхса выртать, ун икĕ айккипе чăлт шурă çĕмĕртлĕх ырă шăршипе хăй патне туртать.* (П.Аф.)<br>*Çав вăхăтра Илюк тăрса ларса алăк çине пăхма тытăнчĕ: кам килме пултарать кун пек вăхăтра?* (Л.Аг.) |

## Союзсăр хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси

| Чарăну паллисем | Хăçан лартаççĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Запятой | Хутсăр предложенисем пĕр евĕрлĕрех ĕçсене е пулăмсене сăнлаççĕ. | *Правлени çурчĕн чӳречисем пĕр вăхăт хĕмленсе йăлкăшрĕç, унтан вĕсем тĕксĕмленсе хуралчĕç.* (Л.Аг.) |
| Икĕ точка | Хутсăр предложенисенчен иккĕмĕшĕ пĕрремĕшне мĕн енчен те пулин ăнлантарать. | *Тăван çĕршывран аякра пурăнакан салтаксен йăли çапла вăл: пĕр енчи çынсене тĕл пулсан яланах хăйсен çĕршывĕ çинчен юратса асăнаççĕ.* (А.Арт.) |
| Тире | Хутсăр предложенисем ĕçсем пĕр-пĕрин хыççăн хăвăрт е кĕтмен çĕртен пулса иртнине кăтартаççĕ. | *Сержант каласа та пĕтереймерĕ – пӳлĕм стенисем витĕр снаряд çурăлмасăр шăхăрса тухса кайрĕ.* (А.Арт.) |
| | Хутсăр предложенисем пĕр-пĕрне хирĕçлеççĕ. | *Кун хыççăн кун, эрне хыççăн эрне иртрĕ – дивизи çав-çавах вырăнтан хускалман-ха.* (С.Павл.) |
| | Хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе следстви, условипе результат, вăхăтпа результат пĕлтерĕшĕсемпе çыхăнаççĕ. | *Хӳхĕм хĕрĕн хĕрлĕ сăнĕ шуралнăçемĕн шуралса пынă, сарă кăтрисем кăвакарнă – вăл вăхăтсăр ватăла пуçланă.* (А.Арт.) |
| Точкăпа запятой | Хутсăр предложенисен калăпăшĕ пысăк тата вĕсен ăшĕнче запятойсем пулаççĕ. | *Шăрантарса пăхакан хĕвел ăшшинче пĕтĕм çут çанталăк чĕрĕлнĕ; юр айĕнчен тин кăна тухнă çĕр ирĕккĕн сывласа, пăсланса выртать; сукмак хĕрринчи тункатасем çумĕнче çĕлен калчи çемçешке симĕс чĕлхине кăларнă.* (Ю.Скв.) |

# ПĂХĂНУЛЛĂ ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ

## Пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе çыхăнтаракан мелсем

| Мелсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Пăхăнуллă союзсем | *Çумăр ўккелеме тытăнчĕ* ***пулсан та*** *уяври халăх саланма шутламасть.* (Ю.Скв.) *Ĕнесем утă купине ан тивччĕр* ***тесе*** *Микихвер пĕр купа патне пырса ларчĕ.* (Г.Луч.) |
| 2. Союзла сăмахсем | *Çип* ***ăçта*** *çинçе, çавăнтан татăлать теççĕ.* (Ват.сăм.) ***Кам*** *ыран ниçта та каймасть, çав садра чечек лартать.* (Ç.Элк.) |
| 3. Хыççăмахсем | *Эрпике пĕве пуçĕнче кĕпе çунă* ***чух*** *каччăсем ун умĕнче пĕве урлă ăмăртмалла ишсе каçнă.* (А.Арт.) |
| 4. Аффикссем | *Кашкăрĕ куçран* ***çухалсан*** *тин хытса ларнă чĕлхе хускалчĕ.* (М.Кип.); *Савăл сухаллă янахĕ чалăшшăн çĕкленсе пĕр енчен тепĕр енне* ***пăркаланни*** *Кируша мăнаçлă хур аçине аса илтерет.* (А.Талв.) |
| 5. Пăхăнуллă предложенин вырăнĕ | *Рая* ***шкулти ăсату каçĕ валли аппăшĕ укаллă пурçăнран çĕленĕ*** *кĕпине утюгпа якатма пуçларĕ.* (Л.Сачк.) |

## Пăхăнуллă предложенисене пĕлтерĕш енчен ушкăнлани

| Пăхăнуллă предложенисен тĕсĕсем | Ыйтăвĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. Подлежащи пулакан пăхăнуллă предложени | Подлежащи ыйтăвĕсем | ***Мĕн акатăн,*** *çав шăтать.* (Ват.сăм.) ***Машина кĕтмен çĕртен килсе тухни*** *Ванюшка шухăшĕсене татрĕ.* (Л.Аг.) |
| 2. Сказуемăй пулакан пăхăнуллă предложени | Сказуемăй ыйтăвĕсем | ***Çини мĕнле,*** *ĕçлени çавнашкал.* (Ват.сăм.) |
| 3. Дополнени пулакан пăхăнуллă предложени | Дополнени ыйтăвĕсем | *Ыйхăран шарт сиксе вăраннă пек туртăнса илетĕп те* ***хамăр паталла икĕ аркăллă вăрăм кĕпе тăхăннă хĕрарăм уксахласа килнине*** *(мĕн?) куратăп.* (К.Турх.) |
| 4. Определени пулакан пăхăнуллă предложени | Определени ыйтăвĕсем | *Тăна кĕме ĕлкĕрнĕ Иванкка* ***вĕçĕмсĕр ахлатса пĕр вырăнта çаврăнса çўрекен старик пăрахнă*** *(мĕнле?) чула çатăрласа тытрĕ.* (М.Юхма.) |
| 5. Обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложени | Обстоятельство ыйтăвĕсем | ***Саламли иккĕмĕш бригада уйне, Автан çырми патне, пырса кайнă хыççăн*** *(хăçан?) Андрей хăйне чи телейлĕ çын пек туйрĕ.* (А.Арт.) |

## Пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси

| Чарăну паллипе уйăрасси | Тĕслĕхсем |
| --- | --- |
| 1. Союзла сăмахсемпе, ***мĕншĕн тесен*** союзпа ҫыхăнакан пăхăнуллă предложенисене тĕп предложенирен запятой лартса уйăраҫҫĕ. | ***Кам*** *хура-шур курман, вăл ҫын хуйхи-суйхине ăнланмасть.* (Ват. сăм.) *Эпĕ хирĕҫ нимĕн те калаймастăп,* ***мĕншĕн тесен*** *хитрелĕх ҫинчен калаҫма, уйрăмах ăна ăста куҫĕпе пахалама е тиркеме чăн-чăнах хитре ҫын кăна пултарать.* (Ю.Скв.) |
| 2. Ытти союзсемпе е хыҫсăмахсемпе, е урăх мелсемпе ҫыхăнакан пăхăнуллă предложенисене хутлă предложени пĕлтерĕшĕ ыйтман чухне тĕп предложенирен запятойпа уйăрмаҫҫĕ. | *Аякранах курăнса хăратса тăтăр* ***тесе*** *Ивук унăн хуппине те каҫах шуратса хучĕ.* (Хв.Уяр.) *Ыратни иртсе* ***кайиччен*** *Ванюшка ним чĕнмесĕр мачаналла пăхса выртрĕ.* (Л.Аг.) |
| 3. Пăхăнуллă предложенипе тĕп предложени хушшине вĕсен иккĕшĕн те сказуемăйĕсем ***-и*** аффикс йышăннă чухне тире лартаҫҫĕ. | *Ыратсассăн тем те калăн:* ***юн юхни*** *– шыв* ***юхни*** *мар.* (П.Хус.) |
| 4. Пĕлтерĕшпе пăхăнуллă предложенипе тĕп предложение иккĕшне те ăнлантаракан сăмахсене пăхăнуллă предложенирен запятойпа уйăрмаҫҫĕ, тĕп предложение кăна ăнлантараканнисене уйăраҫҫĕ. | *Кун пек ҫынсем,* ***ҫил хăш еннелле хытăрах вĕрет,*** *ҫавăнталла тайăлаҫҫĕ.* (Хв.Уяр.) |

## Пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ

| Вырăнĕ | Тĕслĕхсем |
| --- | --- |
| 1. Тĕп предложени умĕнче | ***Йĕтем ҫинчи халăх киле кайса пĕтсен*** *Петр Михалч пĕр-пĕчченех ҫулне-йĕрне пăхмасăрах килнелле танккарĕ.* (А.Арт.) |
| 2. Тĕп предложени варринче | *Ванюшка каялла пăхрĕ те* ***нимĕҫ салтакĕсем халăх ҫинелле пынине*** *курчĕ.* (Л.Аг.) |
| 3. Тĕп предложени хыҫĕнче | *Никам та астумасть* ***вĕсене авал кам лартса хăварнине.*** (Т.Пет.) |

# ТӲРĔ ТАТА ТӲРĔ МАР ПУПЛЕВЛĔ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ

## Урăх çын сăмахĕсене палăртмалли мелсем

| Тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем (урăх çын сăмахĕсене ним улăштармасăр калаççĕ). | *Старик ăна илтмĕш пулчĕ, чĕлĕмне паклаттарса шăл витĕр каларĕ: **«Аçу та хăй ĕмĕрне хăмла картинче ирттерчĕ».*** (А.Арт.) |
| 2. Тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисем (урăх çын сăмахĕсем улшăнма пултараççĕ). | ***Кунта интереслĕ тĕл пулусем пулма пултарни çинчен** каласа пачĕ Валентин.* (А.Арт.) |

## Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисенче чарăну паллисем лартасси

| Тӳрĕ пуплевĕн вырăнĕ | Чарăну палли лартас уйрăмлăхсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 |
| 1. Автор сăмахĕсем умĕнче | Тӳрĕ пуплев хыççăн ыйту палли е кăшкăру палли, е запятой тата тире лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ, автор сăмахĕсене пĕчĕкрен пуçласа çыраççĕ. | *«Хамăр ята çухатасран хăрана пуль çав», – терĕ мана магазин хуралçи Эптюш Валентинович.* (Хв.Уяр.) |
| 2. Автор сăмахĕсем хыçĕнче | Автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ, тӳрĕ пуплеве пысăкран пуçласа çыраççĕ, ун вĕçне ыйту палли е кăшкăру палли, е точка лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ. | *Кунти чăвашсем мĕншĕн тĕне кĕмесĕр юлнă тенине хирĕç шкул умĕнчи карчăксем кулкаласа çапла ответлерĕç: **«Эпир вырăссем хăйсем те тĕне кĕме пăрахасса кĕтсе пурăнтă».*** (Хв.Уяр.) |
| 3. Автор сăмахĕсем варринче | Автор сăмахĕсен пĕрремĕш пайĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ, тӳрĕ пуплев хыççăн запятой е ыйту палли, е кăшкăру палли тата тире лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ, автор сăмахĕсене пĕчĕкрен çыраççĕ, хыççăн икĕ точка лартаççĕ. | *Çамрăк тăмани калать: **«Ак эпĕ ăна хăрах урапа çаклатам та теприне часрах йывăçран ярса тытам»**, – тет.* (И.Як.) |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| 4. Автор сăмахĕсем тӳрĕ пуплев варринче | 1) Автор сăмахĕсем хутсăр е хутлă предложени пулакан тӳрĕ пуплеве татаççĕ пулсан тӳрĕ пуплевĕн пĕрремĕш пайĕ хыççăн запятойпа тире, тӳрĕ пуплевĕн иккĕмĕш пайĕ хыççăн точка е ыйту палли, е кăшкăру палли лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ. 2) Автор сăмахĕсем тӳрĕ пуплеври уйрăм предложенисем хушшинче тăраççĕ пулсан автор сăмахĕсем хыççăн точкăпа тире лартаççĕ, тӳрĕ пуплевĕн иккĕмĕш пайне пысăкран пуçласа çыраççĕ. Тӳрĕ пуплевĕн пĕрремĕш пайĕ хыççăн та, иккĕмĕш пайĕ хыççăн та тивĕçлĕ чарăну паллисем лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ. | *«Кун пеккине мар тӳснĕ, –* ***терĕ Актаев,*** *– Саксонире сахал мар чул ватнă».* (А.Арт.) *«Эпир çапăçăпăр-ха, –* ***терĕ каччă кăнтăрлахи сăмахсене аса илсе.*** *– Е çĕнтерӳ пулĕ унта, е...»* (А.Арт.) |

# ТУПМАЛЛИ

## ФОНЕТИКА


Алфавит . . . . . 4
Уҫă сасăсем . . . . . —
Сингармонизм (уҫă сасăсен килĕшĕвĕ) . . . . . —
Аффикссен хытă тата ҫемҫе варианчĕсем . . . . . 5
Уҫă сасăсен килĕшĕвне пăсакан аффикссем . . . . . —
Хупă сасăсем . . . . . —
Юнашар тăракан хупă сасăсен пĕрпекленĕвĕ . . . . . 6
Хытă тата ҫемҫе хупă сасăсем . . . . . —
Хупă сасăсем янăраса илтĕнни . . . . . —
Ялан янăравлă хупă сасăсем . . . . . —
Хупă сасăсем вăрăммăн тата кĕскен илтĕнни . . . . . 7
Ударени . . . . . —


## ЛЕКСИКА


Сăмахсен тӳрĕ тата куҫăмлă пĕлтерĕшĕсем . . . . . 8
Синонимсем . . . . . —
Омонимсем . . . . . —
Антонимсем . . . . . —
Ятарлă сăмахсем (профессионализмсем) . . . . . —
Йышăннă сăмахсем . . . . . 9
Кивелнĕ сăмахсем . . . . . —
Ҫĕнĕ сăмахсем . . . . . —
Диалект сăмахĕсем . . . . . —
Тиркевлĕ сăмахсем . . . . . 10


## СĂМАХ ТЫТĂМĔ


Сăмах тымарĕ тата аффикссем . . . . . —
Сăмаха улăштаракан аффикссем . . . . . —
Сăмах тăвакан аффикссем . . . . . 11
Сăмах тĕпĕ . . . . . —
Пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле сăмахсем . . . . . —
Хутлă сăмахсен пулăвĕ . . . . . 12
Мăшăр сăмахсем . . . . . —
Мăшăр сăмахсен пулăвĕ . . . . . —
Икĕ хут калакан сăмахсем . . . . . 13


## МОРФОЛОГИ

### Япала ячĕ


Пайăр тата пайăр мар ятсем . . . . . —
Япала ячĕсен хисепĕ . . . . . 14
Япала ячĕсен пулăвĕ . . . . . —
Аффикс хушăнса пулнă япала ячĕсем . . . . . —
Пулăшу пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсем . . . . . 15

Япала ячĕсен камăнлăх форми . . . . . . . . . . . . 15
Камăнлăх формин аффиксĕсем . . . . . . . . . . . —
Камăнлăх формисен пулăвĕ . . . . . . . . . . . —
Падежсен ыйтăвĕсемпе аффиксĕсем . . . . . . . . . 16
Падежсен пĕлтерĕшĕсем . . . . . . . . . . . . . . 17
Япала ячĕсен вĕçленĕвĕ . . . . . . . . . . . . . . —

**Паллă ячĕ**

Паллă ячĕсен пулăвĕ . . . . . . . . . . . . . . . 20
Паллă ячĕсене тăвакан аффикссем . . . . . . . . . . —
Паллă ячĕсен танлаштару степенĕсем . . . . . . . . —
Танлаштаруллă степень пулăвĕ . . . . . . . . . . . 21
Паллă ячĕсен палăрту форми . . . . . . . . . . . . —
Палăрту форминчи паллă ячĕсен вĕçленĕвĕ . . . . . . —

**Хисеп ячĕ**

Хисеп ячĕсен ушкăнĕсем . . . . . . . . . . . . . —
Хисеп ячĕсен вĕçленĕвĕ . . . . . . . . . . . . . 22

**Местоимени**

Местоименисен ушкăнĕсем . . . . . . . . . . . . . 23
Сăпат местоименийĕсемпе таврăну местоименийĕсен пĕрпек-лĕхĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Çуклăх местоименийĕсемпе паллă мар местоименисен пулăвĕ . . —
Местоименисен вĕçленĕвĕ . . . . . . . . . . . . . 24

**Глагол**

Глаголсен ушкăнĕсем . . . . . . . . . . . . . . . 26
Глаголсен пулăвĕ . . . . . . . . . . . . . . . . —
Иккĕмĕшле глаголсем . . . . . . . . . . . . . . . —
Глаголсен пурлă тата çуклă формисем . . . . . . . . 27
Глаголсен сăпатлă тата сăпатсăр (сăпатлă мар) формисем . . —
Глаголсен сăпачĕсем . . . . . . . . . . . . . . . 28
Глаголсен наклоненийĕсем . . . . . . . . . . . . . —
Кăтарту наклоненийĕ . . . . . . . . . . . . . . . —
Ĕмĕт наклоненийĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 30
Хушу наклоненийĕ . . . . . . . . . . . . . . . . —
Килĕшӳ наклоненийĕ . . . . . . . . . . . . . . . —
**Инфинитив** . . . . . . . . . . . . . . . . . . 31

**Причасти**

Причастисен палăрту формисем . . . . . . . . . . . 32
Палăрту форминчи причастисен вĕçленĕвĕ . . . . . . . —

**Деепричасти**

Деепричастисен пулăвĕ . . . . . . . . . . . . . . 33
Деепричастисен паллăрах пĕлтерĕшĕсем . . . . . . . . —

## Наречи


Наречисене пĕлтерĕш енчен ушкăнлани . . . . 34
Наречисен пулăвĕ . . . . . . . . . . —
Наречисен танлаштару формисем . . . . . . . —

**Евĕрлев сăмахĕ** . . . . . . . . . . . 35
**Хыççăмах** . . . . . . . . . . . . . —
**Союз** . . . . . . . . . . . . . . —
**Татăк** . . . . . . . . . . . . . . 36
**Междомети** . . . . . . . . . . . . —


## ОРФОГРАФИ


***Е, ё, ю, я*** сас паллисене çырасси . . . . . . . 37
***Э, о*** сас паллисене çырасси . . . . . . . . —
Хупă сасăсен çемçелĕхне çырура палăртни . . . . . —
Хупă сасăсем вăрăммăн илтĕннине çырура палăртни . . . 38
***Çы, чы — çи, чи*** çырасси . . . . . . . . . —
Пайăр ятсене çырасси . . . . . . . . . . —
Камăнлăх форминчи япала ячĕсене çырасси . . . . . 39
Хăш-пĕр падеж формисене тĕрĕс çырасси . . . . . . —
Вырăс чĕлхинчен йышăннă япала ячĕсене çырасси . . . 40
Вăйлă степеньри паллă ячĕсене çырасси . . . . . 41
Хисеп ячĕсене çырасси . . . . . . . . . . —
Глаголсене çырасси . . . . . . . . . . . —
Причастисене çырасси . . . . . . . . . . 42
Деепричастисене çырасси . . . . . . . . . 43
Наречисене çырасси . . . . . . . . . . . —
Евĕрлев сăмахĕсене çырасси . . . . . . . . —
Татăксене çырасси . . . . . . . . . . . —
Междометисене çырасси . . . . . . . . . . —


## СИНТАКСИС


Синтаксис единицисем . . . . . . . . . . 43
Сăмах майлашăвĕн тытăмĕ . . . . . . . . . 44
Хутсăр предложенисене каланин тĕллевне кура ушкăнлани . —
Предложенин тĕп членĕсем . . . . . . . . . —
Подлежащи пулăвĕ . . . . . . . . . . . 45
Сказуемăй пулăвĕ . . . . . . . . . . . —
Предложенин кĕçĕн членĕсем . . . . . . . . 46
Определени пулăвĕ . . . . . . . . . . . —
Дополнени пулăвĕ . . . . . . . . . . . 47
Обстоятельство пулăвĕ . . . . . . . . . . —
Обстоятельство ушкăнĕсем . . . . . . . . . 48
Хутсăр предложенисен ушкăнĕсем . . . . . . . —
Пĕр тĕп членлĕ предложенисем . . . . . . . . —
Подлежащисĕр предложенисем . . . . . . . . —
Сказуемăйсăр предложенисем . . . . . . . . 49

Тулли мар предложенисем . . . . . . . . . . . . . 49
Пĕр йышши членсем . . . . . . . . . . . . . . 50
Пĕр йышши членсен ҫыхăнăвĕ . . . . . . . . . . —
Пĕр йышши членсем союзсемпе ҫыхăнни . . . . . . . . —
Союзсăр ҫыхăннă пĕр йышши членсем хушшине чарăну палли лартасси . . . . . . . . . . . . . . . . . 51
Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси . . . . . 52
Предложенири уйрăмлатнă сăмахсем . . . . . . . . . —
Уйрăмлатнă сăмахсен ҫыхăнăвĕ . . . . . . . . . . 53
Уйрăмлатнă членсене чарăну паллисемпе уйăрасси . . . . . —
Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем. . . . . . . . . . —
Кӳртĕм сăмахсен пĕлтерĕшĕсем . . . . . . . . . . 54
Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисене чарăну паллисемпе уйăрасси —
Чĕнӳ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 55
Чĕнӳ пулăвĕ . . . . . . . . . . . . . . . —
Чĕнĕвĕн предложенири вырăнĕ . . . . . . . . . . —
Чĕнӳ сăмахĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси . . . . . . 56
Хутлă предложени . . . . . . . . . . . . . —
Хутлă предложенин тĕсĕсем . . . . . . . . . . . —
Сыпăнуллă хутлă предложенисем . . . . . . . . . . 57
Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем . . . . —
Хирĕҫлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем . . . . . —
Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем —
Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшинчи шухăш ҫыхăнăвĕсем. . . . . . . . . . . . . . . 58
Сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . —
Союзсăр хутлă предложенисене тытăмĕ енчен ушкăнлани . . . 59
Союзсăр хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . —
Пăхăнуллă хутлă предложенисем . . . . . . . . . . 60
Пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе ҫыхăнтаракан мелсем —
Пăхăнуллă предложенисене пĕлтерĕш енчен ушкăнлани . . . . —
Пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . 61
Пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ . . . . . . —
Тӳрĕ тата тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисем . . . . . . 62
Урăх ҫын сăмахĕсене палăртмалли мелсем. . . . . . . . —
Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . —

Учебное издание

**Сергеев Леонид Павлович**
**Андреева Евдокия Александровна**

**ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК**

**Справочник**

Учебное пособие

*На чувашском языке*

Редактор *Н.Ф. Артемьева*
Корректор *Н.Н. Маслова*
Компьютерная верстка *В.Г. Егорова*

Подписано в печать 26.09.06. Формат 60x84 $^1/_{16}$. Печать офсетная.
Усл. печ. л 4,5. Уч.-изд. л. 2,25. Тираж 850 экз. Заказ №1/10

Чувашский республиканский институт образования,
428017, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. М. Горького, 5.

Отпечатано в типографии ПБОЮЛ Л.А. Наумова.
428019, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15.
E-mail: cliobooks@mail.ru